К63.364.4
В 38
4-424924

ЕРШОВ В. И.
ОСИПОВ Н. Н.

# ВĔСЕМ ТĂВАН ÇĔРШЫВА ХӰТĔЛЕНĔ



Национальная библиотека ЧР
4-042922

*1945*



К
Обязат. экз.

Чăваш халăх академийĕ

К63.362.2
В38

# ВĔСЕМ ТĂВАН ÇĔРШЫВА ХӲТĔЛЕНĔ

(Патăрьел районĕнчи Çăл Атăкапа Анат Тăрмăш ялĕсенчи Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçи ветеранĕсен асаилĕвĕсем)

Тăван Çĕршывăн
Аслă вăрçине хутшăннă
Çăл Атăксемпе Анат Тăрмăш çыннисене,
Аслă çĕнтерӳ пулнăранпа 65 çул
çитнине халаллатпăр

Шупашкар
2010

Обязат. экз.

Чувашская народная академия

63.3(2Рос. Чув)622,782(-5Бат-2Верхнее Атыково

ББК 63.3(2)622ю14
УДК 94 (470) «1941/1945»

К63.362.278.2(-5Бат-2Верхнее Атыково)

ОНИ ЗАЩИЩАЛИ РОДИНУ : воспоминания ветеранов великой отечественной войны (уроженцев деревень Верхнее Атыково и Нижнее Турмышево Батыревского района ЧР) / сост. В. И. Ершов., Н. Н. Осипов. – Чебоксары : Новое время, 2010. – 102 с.

Печатается по решению Президиума Чувашской народной академии от 25 марта 2010 года

Рецензенты:

В. П. Станьял, кандидат филологических наук, зав-ий отделом литературоведения и фольклористики Чувашского государственного института гуманитарных наук;

В. А. Ендиряков, кандидат исторических наук, доцент кафедры истории Отечества ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева»;

Мефодьев А.И., кандидат филологических наук, доцент кафедры чувашской литературы ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева».

© Ершов В. И., Осипов Н. Н., составление, 2010
© ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева», 2010

и-42922
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА

# УМСĂМАХ

Аслă çĕнтерӳ пулнăранпа 65 çул кĕрлесе иртрĕ. Тăван Çĕршыв йывăрлăха кĕрсе ӳксен ăна пулăшма пур халăх та кар тăнă. Кашни çемьерен, ялтан, хуларан çынсем Тăван Çĕр аннемĕре ирĕке кăларма çĕкленнĕ. Вăрçăра пулнă кашни салтакăн тӳпи пур Аслă çĕнтерӳре. Куллен тăван халăх паттăрлăхне кăтартакан чылай кĕнеке, кинофильм кун çути курать. Эпир те хамăр (Çăл Атăкпа Анат Тăрмăш) ялĕсен Асăну кĕнекине кăларма шутларăмăр. Пирĕн ял та вăл вăхăтри ытти пин-пин ял пекех тăван çĕре хӳтĕлеме хăйĕн ывăл-хĕрне вăрçа ăсатнă. Мухтавлă ентешĕмĕрсем Тăван Çĕршыв умĕнче хамăр ял ятне яман. Вĕсем тăшманпа вирлĕн кĕрешнĕ. Çапăçури паттăрлăхшăн нумай орден-медаль илме пултарнă. Кашни салтакăн шăпи хăйне евĕрлĕ. Пĕрисем вăрçă вучĕн малтанхи кунĕсенчех Тăван Çĕршывшăн кĕрешсе пуçĕсене хунă. Акă Çăл Атăкри Осипов Ф.В. вăрçăн малтанхи эрнисенчех, 1941 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче хĕрӳ çапăçура паттăрсен вилĕмĕпе вилет. Чурбанов В.Е. Аслă çĕнтерĕве темиçе кун çеç кĕтсе илеймест, 1945 çулхи апрель уйăхĕнче унăн пурнăçĕ татăлать. Партизансен отрядĕнче çапăçнă Еремеев Д.М. шăпи те кăсăклă. Ăна, тыткăна лекнĕскере, нимĕçсем хăйсен чури туса хураймаççĕ. Вăл пĕтĕм вăй-халне пухса лагерьтен тарать, партизансен отрячĕпе пĕрлешсе тăшмана таварать. Вăрçăра паттăрлăх кăтартнăшăн «Хĕрлĕ Çăлтăр» тата I,II степеньлĕ Мухтав орденĕсене тивĕçнĕ Çăл Атăк каччи, Яковлев Я.К. тамăк вучĕ витĕр тĕрĕс-тĕкел тухса, Мускавра 1945 çулхи июнь уйăхĕнче Кремльте пулса иртнĕ Çĕнтерӳ парадне хутшăнма пултарнă. Вăрçăра çапăçнă кашни салтакăн паттăрлăхне уйрăммăн каламалла, вĕсем ăна тивĕçлĕ.

Вăрçăран аманса-сусăрланса таврăннисем тылра кĕрешнĕ. Вĕсен кĕрешĕвĕ – кулленхи ĕç. Фронтри юлташĕсене пулăшас тесе вĕсем кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăрăшнă. Тăван колхозра лăш курмасăр ĕçленĕ.

Ку кĕнеке вулакана Патăрьел районĕнчи Çăл Атăкпа Анат Тăрмăш ялĕсенчи Аслă вăрçа хутшăннă ветерансен асаилĕвĕсемпе тата çырăвĕсемпе паллаштарать. Кун евĕр кĕнекесем малтан та тухман мар, паллах. Акă, тĕслĕхрен,

Патăрьел районĕнчи «Гвардеец» колхоз йышне кĕрекен сакăр (Тури Туçа, Анат Туçа, Кивĕ Ахпÿрт, Çĕнĕ Ахпурт тата ыт. те) ялăн вырăнти Асăну кĕнекине кăларнăччĕ. Унта хăйсен ентешĕсен вăрçări паттăрлăхне аван уçса панă. Çакăн евĕр уйрăм ял, вырăн, район çыннисен Аслă вăрçări е ытти çапăçусенчи пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне çутатакан кĕнекесем юлашки çулсенче тăтăшах курăна пуçларĕç. Вулаканăмăр, сирĕн аллăрти кĕнеке пирĕн Раççей халăхĕ XX ĕмĕрти чи хаяр та шелсĕр вăрçа нихăçан та манманние, çав тискер вăхăтсене хăйсен куçĕпе курнă, унта хутшăннă çынсен асаилĕвĕсемпе сăнарĕсене манăçа кăларма шухăшламаннине çирĕплетсе парать.

Патăрьел тăрăхĕнчен Аслă вăрçа 8377 çын тухса кайнă. Вĕсенчен 6034-шĕ вăрçă хирĕнче Тăван Çĕршыв, район, ял çыннисем тăнăçлă пурнăçпа пурăнччĕр тесе пуçĕсене хунă. Çăл Атăкпа Анат Тăрмăш ялĕсенчен çак ылханлă вăрçа 240 çын тăванĕсемпе çемьисене пăрахса тухса кайнă. Вĕсенчен 141-шĕ тăван Çăл Атăкпа Анат Тăрмăша таврăнайман. Вĕсен çутă сăнарĕсем тăван ял çыннисен асне ĕмĕрлĕхех кĕрсе юлнă. Тăван çĕре таврăннисем те вăрçăра илнĕ сурансемпе ыратусене пула вăхăтсăрах çĕр çинчен уйрăлса кайнă. Апла пулин те, хамăр ентешсен, вĕрентÿпе культура ĕçченĕсен тăрăшулăхне пула, эпир паянхи кун та (паянхи кун тĕлне Çăл Атăкпа Анат Тăрмăшран Аслă вăрçа хутшăннă пĕр çын та юлман пулин те), 1941-1945 çулсенчи хаяр вăрçăн ахрăмне халăх чĕринче упраса хăварма пултартăмăр. Вĕсем – вăрçă ветеранĕсен асаилĕвĕсемпе сăнÿкерчĕкĕсем, çапăçури паттăрлăхшăн панă медальсемпе орденсем, тав çырăвĕсемпе хучĕсем тата ыт. те. Пуринчен ытла ветерансем туса хăварнă ырă ĕçсемпе пуçарусем тăван ял халăхĕн асĕнче упранаççĕ.

Кĕнекене Çăл Атăк ялĕнчи Ершов В.И. учитель-краевед хăй шкулта ĕçленĕ çулсенче ачасемпе пĕрле ветерансен асаилĕвĕсене çырса илнĕ тĕслĕхсем, уçă уроксемпе çĕнтерÿ парадне хутшăннă ветеран-ентешсен сăнÿкерчĕкĕсем, шкул музейĕнче упранакан салтак çырăвĕсем кĕнĕ. Хальхи вăхăтра çÿлерех асăннă ялсенче вăрçă ветеранĕсем пачах та юлман терĕмĕр. Эппин ÿссе

пыракан ăрăва – тăван ял, халăх историйĕпе, культурипе, пурнăçĕпе паллаштаракан çăлкуç вырăннех пулĕ ку кĕнеке. Çавăн пекех тăван ăру, ял шăпипе кăсăкланакан пур çынна та усăллă пулма пултарать.

Çапла вара, çак кĕнеке 1941-1945 çулсенчи Тăван Çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă Çăл Атăкпа Анат Тăрмăш çыннисен ырă ятне упракан палăк пултăр.

*Н. Н. Осипов, 2010ç.*

## КĔНЕКЕНЕ ВУЛАКАНСЕНЕ

Совет Çарĕсем çапса аркатнă фашистсен тĕп хулинче çĕнтерӳ ялавĕ мухтавлăн вĕлкĕшме пуçланăранпа теçеткешер çул иртрĕ. Анчах çулсем çак паллă пулăма çынсен асĕнчен сĕвĕрĕлме памаççĕ. Çулсем иртнĕçемĕн ку çĕнтерӳн аслă пĕлтерĕшĕ уççăнрах курăнса пырать.

Фашистла Германие çĕнтерни пирĕн халăхăн этемлĕхшĕн кĕрешсе тунă пысăк паттăрлăхĕ пулса тăчĕ.

Вăрçă чарăннăранпа нумай улшăну пулса иртрĕ. Вăрçă вăхăтĕнче арканнă хуласемпе ялсем татах та илемлĕреххĕн çĕнелсе ларчĕç, пурнăç тĕпренех улшăнса чечекленсе пырать.

Эпĕ час-часах вăрçă çулĕсене аса илетĕп.

Çук, эпĕ вăрçăра пулман. Вăрçă пуçланнă çул тăххăрта çеç пулнă-ха, 1-мĕш класран вĕренсе тухнă. Бомбăсем çурăлнине, снарядсем чуна çӳçентерсе уланине, пульăсем пуç çинчен шăхăрса вĕçнине те илтмен эпĕ, çĕр чĕтресе çуннине те курман. Хăлхана хуплас пек кĕрлекен вăрçă шавĕнче Тăван çĕр-аннен кăкăрĕ çумне хӳтлĕх шыраса пĕтĕм ӳт-пӳпе лăпчăнса выртман, вилĕме те куçран пăхман.

Тăван Çĕршыв çине сĕмсĕррĕн тапăннă тăшмана тарăхса хаярран шăпланнă ял, кашни кун макăрса-йĕрсе ачисене, упăшкисене, аппăшĕсене, пиччĕш-шăллĕсене фронта ăсатакан ял-йыш, «вилнĕ хут» килнĕ çынсен çемьисем татăлса йĕни, хуйхăпа вăхăтсăрах шуралнă, ватăлнă çынсен сăн-пичĕсем куç умĕнчен каймаççĕ. Фронта кайнă арçынсен вырăнне тăнă хĕрарăмсем, ватă-вĕтĕсем çĕрĕн-кунăн ĕçлени, выçăпа шыçăнса тăрганнă пит-куççем, начарланнипе куçĕсем кăна тăрса юлнă имшер ачасем амăшĕсемпе пĕрле лашасем вырăнне кӳлĕнсе кĕлте туртни, çуркуннехи шĕвек пыльчăка çĕтĕк çăпатасемпе çăрса шăннă улма пуçтарни нихçан та асран тухмаççĕ.

Эпир те ун чухнехи шкул ачисем, вăй çитнĕ таран фронта пулăшаттăмăр: сăмса тутрисем, табак енчĕкĕсем çĕлесе фронта ăсататтăмăр, пысăккисемпе пĕр тан колхозра ĕçлеттĕмĕр. Шкулта кашни класрах фронт куçса пынине кăтартакан ялавсем лартнă карттăсем çакăнса тăратчĕç. Пирĕн çар наступление кайсан, чунран

савăнаттăмăр, ялавсене каялла чакарма тивсен, хурланаттăмăр.

Тăван çĕршыва тăшманран тасатма Çăл Атăкпа Анат Тăрмăшран 240 çын тухса кайнă. Вĕсенчен 141 çын аслă вăрçă хирĕнче пуçĕсене хучĕç. 99 çын каялла таврăнчĕç. Анчах вăрçăра илнĕ йывăр сурансене е сывлăхне хавшатса килнине пула вĕсенчен те чылайăшĕ вăхăтсăрах çĕре кĕчĕç. 1978 çул тĕлне 39 вăрçă ветеранĕ сывă пурăнатчĕ. (Паянхи кун Çăл Атăкпа Анат Тăрмăшра вăрçа хутшăннă пĕр ветеран та юлмарĕ).

Ялта патак çине таянса пыракан е шурă юр пĕрчисем сапнă евĕр кĕмĕлленнĕ çÿçлĕ ватăсене курсан, ман куç умне вăрçă çулĕсем яр уççăн тухса тăраççĕ. Эпĕ хисеплĕ ветерансене сума суса пуç тайса сывлăх сунатăп. Ĕлĕкхи чăвашсен йăлипе сывлăхĕ пирки ыйтса пĕлместĕп: мĕншĕн çыннăн ыратакан суранне хускатас-ха? Унсăрăнах паллă. Вăрçă суранĕ-терчĕсем, паянхи ÿт-пĕвĕнче йăтса çÿрекен тимĕр тĕпренчĕк-осколкăсем вĕсене канăç памаççĕ, хаяр вăрçă çулĕсене аса илтерсех тăраççĕ.

Вăрçă ветеранĕсем шкулти вĕренекенсемпе тачă çыхăну тытаççĕ: тĕлпулусем, калаçусем иртереççĕ. Нумайăшĕ шкулти пионер дружинин хисеплĕ пионерĕ.

Хамăрăн Тăван çĕршыва кăкăрĕпе хÿтĕленĕ ентешсем сывă чух, вĕсен асаилĕвĕсене пулас ăрушăн упраса хăварас тĕллевпе эпир алăпа çырса журнал кăларас терĕмĕр. Ку ĕçре пирĕн пионерсем чылай ĕçсем турĕç. Вĕсем вăрçăра пулнă çынсем патне кайса килчĕç, асаилĕвĕсене çыра-çыра илчĕç.

Тен пирĕн журналта хăш-пĕр вырăнсенче тĕрĕс мар çырнисем пулма пултараççĕ. Анчах мĕнле пулсан та эпир вăрçă ветеранĕсен асаилĕвĕсене хăйсем каласа панă пекех çырса кăтартатпăр. Хăçан та пулсан пирĕн çамрăксем çак журнала алла илсе ашшĕ-амăшĕ çинчен вуласа пĕлсен, эпир питĕ кăмăллă пулнă пулăтăмăрччĕ.

*В. И. Ершов, 1978 ç.*

## ÇĔНТЕРӰШĔН ТĂРĂШНĂ

1939 çулта Иккĕмĕш тĕнче вăрçи пуçланнă. Фашистла Германи чылай çĕршывсене пăхăнтарнă. 1941 çул тĕлне Совет Союзĕн чиккисене хăйĕн çарĕсене куçарнă. Вăл Совет Союзĕ çине тапăнасси паллă пулнă. 1941 çулта Львовра çар хĕсметĕнче тăнă Петр Ершов, манăн пичче, хăйĕн сăнӳкерчĕкĕсен альбомне йăлтах киле ярса панăччĕ. «Кунта лăпкă мар, тем те пулма пултарать», - тесе çырнăччĕ вăл хăйĕн çырăвĕнче.

Житковичи патĕнче службăра тăнă Пазитов Варсонофий Александрович çырăвĕнчен. 1941 çулхи, июнĕн 1-мĕшĕ. «Çыру çыраймарăм. Пĕр вырăнта тăма пулмарĕ. Вăхăт çитмест çыру яма. Кашни кӑнмалли кунсенче те тивет ĕçлеме. Ку вырăнта мĕнле пулать-ха, нимĕн те пĕлместĕп. Çакна çырса пĕлтерем тата. Ман кунта питĕ хуйăх тăрать. Ку, конечно, сире каламалли мар-ха вăл. Сире каласан эсир питĕ хуйхăрма тытăнатăр».

*БССР, Полесская область,*
*Житовический район,*
*м. Житовичи, п/я № 5025.*

Пĕр вăхăт Брест облаçĕнче м. Малоритăра службăра тăнă. п/я № 6525.

Çарти çынсем вăрçă пуçланас хăрушлăха пĕлсе, туйса тăнă.

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче Фашистла Германи çарĕсем Совет Союзĕ çине тапăнса кĕчĕç. Ялти вăйпитти çынсене пĕрин хыççăн теприне вăрçа илсе кайма пуçларĕç. Урамра унта та кунта салтак юррисем илтĕнме пуçларĕç. Ял çыннисем куççӳлĕсене юхтарса тăванĕсене фронта ăсатчĕç. Эпĕ ун чухне 1-мĕш класра вĕренме пуçланă. Шкулти арçын учительсене те фронта ăсатрăмăр. Пĕррмĕш класра пире Кĕçĕн Патăрьел çап-çамрăк каччă Владимиров Иван Владимирович вĕрентетчĕ. Ăна та вăрçа ячĕç. 2-мĕш класра Ширтанов Пантелеймон Ильич вĕрентрĕ. Темиçе уйăхран ăна та фронта ăсатрăмăр. Вара хĕрарăмсем вĕрентме пуçларĕç.

Ялти пĕтĕм ĕç ваттисен, хĕрарăмсен, ачасен ĕнси çине тиенчĕ. Лайăх лашасене те фронта илсе кайрĕç. Вăрçăн пĕррремĕш çулĕсенчех эвакуаци йĕркипе яла вырăссем, украинсем, еврейсем т. ыт. халăх та килме пуçларĕç. Вĕсене пĕччен карчăксем патне е пушă çуртсене вырнаçтарчĕç. Ĕçлеме пултараканнисем колхозра ĕçлетчĕç, фермăсене çӳретчĕç. Ачисем пирĕнпе пĕрле шкулта вĕренетчĕç, урампа пĕрле выляттăмăр. Ман асра уйрăмах Женькапа Борис тăрса юлчĕç. Вĕсем 1943 çулччепех пурăнчĕç. Пузырев К. М. çуртĕнче пурăнатчĕç. Чăвашла калаçма хăвăрт вĕренчĕç, лайăх калаçатчĕç.

Тăван çĕрĕсене фашистсенчен тасатнă хыççăн кайса пĕтрĕç.

Ялти çынсем хĕвелпе пĕрле ĕçе тухса сĕм çĕрлеччен ĕçлетчĕç. Алă вĕççĕн тумалли ĕç йывăр пулнă. Шăла çыртнă та чăтнă, çĕнтерӳшĕн ĕçленĕ, хăйсем выçă ларнă пулин те пĕтĕм тырри-пуллине фронта ăсатнă. Хирте ачапăча ака тăватчĕ, ваттисем те ĕçе тухатчĕç, хĕрарăмсем те арçынсем пекех лашапа ĕçлеме пуçларĕç.

Çак вăхăтра выçлăх çулĕсем пуçланчĕç. Тĕрлĕрен курăксем, юман йĕкелĕсем авăртса, кăчăкăсем, шăннă улма пуçтарса çиетчĕç. (Иртнĕ кĕркунне хире юлнă çĕрулмине çуркунне пыльчăк çăра-çăра пуçтаратчĕç, крахмалĕнчен пашалу пĕçеретчĕç). Ĕнесем усрани çеç нумай çынна вилĕмрен çăлса хăварчĕ пулас.

1942 çулта Пузырев Иван Матвеевич аманса килчĕ. Ăна колхоз председательне суйларĕç. Пĕр çулхине выçă халăха кăштах та пулин тыră парас тесе районти пуçлăхсенчен вăрттăн Аслыр айĕнчи пĕр пĕчĕк лаптăк тырра вырчĕç те халăха валеçсе пачĕç. Халăх выçăпа вăйран кайнă, вырмана та тухаймасть. Ун чухне ĕçе тухакан кашни çынна 200-300 грамм тыră е çăнăх паратчĕç. Çавăнпа мĕнпур вĕтĕр-шакăр ачасене çум çумлама илсе тухатчĕç, çын шучĕ пултăр! Тыр-пул пухса кĕртнĕ вăхăтра салма яшки пĕçерсе çитеретчĕç. Çынсем савăт-сапине хире илсе çӳретчĕç.

Вăрçă вĕçленес çулсенче лашасемпе пĕрлех вăкăрсене кӳлме вĕрентрĕç. Вĕсемпе ĕç вăйĕ вырăнне усă куратчĕç.

Ку выльăхсем вара пуçтахскерсемччĕ. Шăна-пăван вăхăтĕнче кăнтăрла вăрмана кайма çукчĕ, тĕмсем хушшине çĕмĕрсе кĕрсе каятчĕç. Сухаланă чух йăран хушшине вырса тарăхтаратчĕç. Çулпа пынă чух пĕр-пĕр кĕтӳ курсан хир урлах унта чавтаратчĕç, тытса чарма та çукчĕ. Пахча кĕтессинчен иртнĕ чух тӳртен кайса урапасене çаклататчĕç.

Çапла пулин те ку чĕлхесĕр янаварсене çынсем тав тăватчĕç. Мĕн чухлĕ ĕç тума пулăшнă вĕсем халăха.

Харпăр хăй валли вутă турттарма килти ĕнесене кӳлме вĕрентрĕç. Пурте мар, паллах. Эпир те хăмăт пекки меллештерсе ĕнене кӳлкелеремĕр. Ун чухне вутă вăрмантан хĕлĕпе турттаратчĕç. Хăрăк-харăксем пуçтарса килетчĕç те пӳрт хутатчĕç.

Манăн шкулта вĕреннĕ чухнехи юлташăм, Чăваш халăх поэчĕ Геннадий Айхи, хăйĕн «Чĕрĕ тĕвĕ» поэминче çак тапхăр çинчен çапла çырать:

Хĕл варринче ĕне кӳлсе,
Тĕл-тĕл кĕренленсе хуралнă,
Кӳтсе тăртаннă алăсем
Пĕрре те кайăксем пек марччĕ.

Çак терт-асапа вăл хăй тӳссе иртнĕ.

Ялта никамăн та радио пулман. Фронтри ĕçсем пирки учитель-агитаторсем калаçа панă тăрăх пĕлеттĕмĕр. Вĕсем хаçатсем урлă пĕлсе тăнă ентĕ.

Ял çыннисемпе шкул ачисем фронт валли ăшă япаласем (тумтирсем), табак енчĕкĕсем т. ыт. те пуçтаратчĕç.

Час-часах çынсем «вилĕм хучĕсем» илетчĕç. Хыпарсăр çухалнисем мĕн чухлĕччĕ тата. Вĕсен вилĕм хучĕсем те пулман, çырусем те, сас-хура та пачах пулман вĕсем çинчен. Çемйисем ялан кĕтнĕ вĕсене, кĕтсе илеймен.

Вăрçă вăхăтĕнче эпир шкулта вĕреннĕ. Вĕренме питĕ йывăрччĕ. Хут-кăранташ пулман, кĕнекесем çитмен. Классенче сивĕччĕ, чернилсем шăнса ларатчĕç. Чернилсене хăрăмран тăваттăмăр. Унпа çырнă сăмахсем часах тĕссĕрленетчĕç. Ачасем выçăпа аптăратчĕç, доска умĕнче ӳкекенсем те пулатчĕç. Ачасем шкула çăпатасемпе çӳретчĕç. Çăпата тума вăрмантан вăрттăн пушăт сӳсе ки-

легчĕç. Арçын ачасем çăпатисене хăйсемех тунă-ха. Анчах килте арçын ачасем пулмасан? Çакăн пек хĕрачасене пулăшас шутпа çăпата тăвакансен кружокне те туса пăхрĕç. Анчах ĕçĕ тухсах каймарĕ курăнать, часах кружок ĕçлеме пăрахрĕ.

И. М. Пузырев колхоз председателĕнче ĕçленĕ вăхăт. 1943 çулхи июль уйăхĕн пуçламăшĕ. Ялти алла кĕрепле, сенĕк тытма пултаракан пур çын та вăрмана утă тума кайнă. Яла ваттисемпе вĕтĕ-шакăр ачасем çеç юлнă. Аннепе 12-ри теге те утăра. Киле эпĕ асли пулса юлнă, 6 шăллăмпа йăмăксене пăхмалла, йĕрке тумалла.

Çак çул питĕ шăрăх çанталăк тăчĕ, çумăр çумарĕ. Шывсем типрĕç, çырмара пулăсем типпе юлчĕç. Алăпах тытаттăмăр, лупас çине хурса типĕтеттĕмĕр. Лупассене улăм витнĕччĕ. Ура айĕнче улăм çăтăртатса хуçăлатчĕ.

Пĕр хĕвелле кун урамра кăшкăрашнине илтрĕм те урама тухса чупрăм. Кĕтесре тăратăп. Кăттясен пӳрчĕ çунать. Çунакан улăм чăмăрккисем çилпе пирĕн урамалла вĕçеççĕ. Куç умĕнчех Прохоров В. Я. лупасси çине çунакан улăм чăмăркки лекрĕ те, лупас тар пек лапкăшпех хыпса илчĕ. Пирĕн хапха çийĕпе урама тĕтĕм тухать. Картишне чупса кĕретĕп. Çур картишне вут-çулăм хыпса илнĕ. Пĕчĕккисене хирелле чупма хушрăм. Пĕр-ик сехет хушшинче пирĕн урамра 6 кил çунса кĕлленчĕ, аялта – пĕр кил. Колхоз утарĕ Кăття аппа пахчинчеччĕ. Колхоз пуçлăхĕсен пыл çиес килнĕ. Пылне илнĕ чух Александрова Е. Н. асăрханаймасăр кăвар ӳкернĕ.

1944–1946 çулсенче шкулта ачасене мимĕр çитеретчĕç. Вĕри шыв çине çăнăх пăтрататчĕç те вĕрететчĕç. Çавăнпа тирĕкпе кашăксене пĕрле илсе çӳреттĕмĕр. Ун чухне эпир Çĕньялти çичĕ çул вĕренмелли шулта вĕренеттĕмĕр.

Сентябрь уйăхĕнче вĕрентмесчĕç. Шкулĕпех колхоз хирĕнче ĕçлеттĕмĕр.

Ача-пăча ачах çав. Мĕнле йывăр пулсан та савăнма та пĕлеттĕмĕр. Шкулта спектакльсем лартаттăмăр. Ку вăл 1945–1947 çулсенче пулнă. Спектакльсенче 6-7-мĕш класс ачисем пысăккисен ролĕсене, 4-5 класс ачисем пĕчĕккисен

ролĕсене вылятчĕç. «Алим», «Çăлтăрлă çĕлĕк» т. ыт. пьесăсене вылярăмăр.

Кунта уйрăмах çак ачасем активлăччĕ:

*Нягин И. В.* – Чăваш Республикин тата РФ тава тивĕçлĕ ял-хуçалăх ĕçченĕ.

*Семенов Илья Васильевич* – Мускавра пурăнать.

*Ершов Владимир Иванович* – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ, РФ халăха вĕрентес ĕç отличникĕ.

*Лисин Геннадий Николаевич* – Халăх поэчĕ.

*Путяков Лев Александрович* – учитель.

*Исливанов Егор Сергеевич* – авиатехник.

*Осипова Вера Александровна.* – вăрман ĕçченĕ.

*Ершова Зинаида Андреевна* – колхозница.

*Сердюкова Нина Алексеевна* – сутуçă.

*Ершов Николай Иванович* – киномеханик пулса тăчĕ вăхăт иртнĕ çемĕн.

Çулла та, хĕлле те урамра тем вăййи те вылятчĕç: тытмалла, 12 патакла, çекĕлле, чушкăлла, тупăлла, кустăрмалла, йытăлла т. ыт. те.

Чĕкеç тăмĕнчен шакăсем тăваттăмăр. Чĕкеç тăмĕ тесе çăл çинчен илекен çыпăçакан хура-кăвак тăма калатчĕç. Унран çавракка е тăваткал шакăсем тăватчĕç. Вĕсене курăк çинче сăтăрса йăлтăртатакан тăватчĕç. Уйрăмах хĕрачасем ăста вылятчĕç. Эпир, арçын ачасем, шăхличсем тăваттăмăр. Çавăн пекех çуркунне йăмра тураттисене ӳкерсе хуппинчен шăхличсем тăваттăмăр.

Ку вăхăтра чăвашсен ĕлĕкхи йăли-йĕркисем сыхланса юлнăччĕ-ха. Вăрçă вăхăтĕнче тумтирсене те килте хатĕрленĕ. Тĕртсе партянкасем, тăласем хатĕрлетчĕç. Ку пир тăрăхĕсене юр çине пăрахса шурататчĕç. Пирсемпе партянкасене çапса çемçететчĕç. Ăна пир çапни, тетчĕç. 4 хĕр пир тĕркине каска çине (пĕрене) çыхса хуратчĕç те пĕрин хыççăн тепри тукмакпа (пир тукмакки юри тунă) кĕвĕллĕн çапма пуçлатчĕç. Çапса пĕтерне хыççăн сӳтсе туртатчĕç. «Пăхар-ха, эсĕ тĕртнĕ чух миçе пăсарнă», – тĕртсе илетчĕç пир хуçи-хĕре. Пирĕ тапса туртнă май нăтăрт-нăтăрт тăватчĕ, туртакансем шутласа пыратчĕç, кулатчĕç.

Тӑлана вара ӑшӑ мунчара вӗри шывра кисӗппе тӗветчӗҫ. Тӑли килӗреччӗ. Юри вайпитти хӗрсене тӑла тӳме мимене чӗнетчӗҫ. Хӗрсем вара мунчара тӑла тӳсе лачкам пулатчӗҫ. Тӑларан сӑхмансем, чӑлхасем ҫӗлетчӗҫ. Урана сырма та тӑла тӗветчӗҫ. Урана тӑлапа чӗркесе ҫӑпата сыратчӗҫ. Эпӗ пӗчӗк чух хӗр ларма килнине астӑватӑп. Хӗрсем лармара алӑ ӗҫӗ тӑватчӗҫ: тӗрлеҫҫӗ, ҫыхаҫҫӗ, ҫип арлаҫҫӗ, пӗтӗреҫҫӗ т. ыт. те.

Ҫулла урама тухатчӗҫ, юрлатчӗҫ, ташлатчӗҫ. Вӑрҫӑ пыни те чараймастчӗ ҫамрӑксене. Эпир, пӗчӗккисем, Карлинов Анисим умне (халь Анна аппа пурӑнать), е Тимуҫ умне пухӑнаттӑмӑр. Пысӑккисем хӑйсем уйрӑм пухӑнатчӗҫ. Кӗркунне мунчасенче е пӳртсенче улах ларатчӗҫ. Пирӗн касра Тимуҫ мунчинче е пӳртӗнче, Сапожникова Фекла пӳртӗнче ларатчӗҫ. (Халь Карзаков Саша пурӑннӑ вырӑн).

Купӑс таврашсем питӗ сахал пулнӑ, выляканс фронта кайса пӗтнӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче госпитальтен атте пире ҫӑвар купӑсӗ ярса панӑччӗ. Пысӑкраххисем мана улаха чӗнетчӗҫ. Улахра ҫак купӑспа каласа ташлатаратчӗҫ.

Туй таврашӗ пулнине астумастӑп. Авланакан ҫамрӑксем ялта вуҫех те пулман. Пысӑкрах ачасенчен хӑшне-пӗрне ФЗО-на тыта-тыта яратчӗҫ, окопсем чавма хӑвалатчӗҫ, вӑрман касма (куба) илсе каятчӗҫ. Чӑтнӑ, тӳснӗ халӑх!

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ФЗО-на илсе кайнисем:

*Кириллов Петр Анисимович*
*Кириллов Петр Яковлевич*
*Прохоров Петр Васильевич*
*Ершов Николай Федорович*
*Пузырев Сергей Константинович*
*Ярушкин Николай Тимофеевич*
*Ягудина Евдокия Яковлевна*
*Емельянова Перасковия Алексеевна*
*Емельянова Татьяна Павловна*
*Кириллова Мария Васильевна.*

ФЗОна ытти ҫамрӑксене те янӑ, анчах вӗсем е ҫул ҫинченех, е илсе ҫитерсен тарса килнӗ. Астӑватӑп: Ершов

Н. Ф. тарса килнĕшĕн 2-3 уйăх тĕрмере ларса килчĕ. Кириллова М.В. та ларса тухрĕ. Маня аппĕ (вăл вăхăтра милицире ĕçлеччĕ те) хĕрне хăйех Первомайскине илсе кайрĕ.

Ун чухне колхозра ĕçлекенсен нимĕн те киле илсе кайма юраман. Пăрçа аксан, ăна та хураллатчĕç. Çыннăн пурăнас килет-çке. Тата хăй кăна та мар, унăн килĕнче ачисем выçă лараççĕ. Вара чееленетчĕç те. Хĕрарăмсем саппун айĕнчи кĕпен çӳлти аркисене аяккипе айалтан çĕлетчĕç те çӳлтине сӳтсе яратчĕç. Хăйне евĕр кĕсье пулса тăратчĕ. Кунта тырă шĕкĕлчесе тултаратчĕç. Килте ăна ăшаласа ачисене çитеретчĕç. Ку вăрттăнлăха пĕр-пĕринчен пытарман вĕсем, начальниксенчен çеç вăрттăн хăтланнă. Председательсемпе бригадирсем те ăна сисмен мар ĕнтĕ, анчах шарламан. Вăрçă пĕтнĕ çулсенче Егоров Дмитрий Тимофеевич пĕр кĕсье пучах тултарса килнĕ. Ăна уншăн айăплаCа 4 çула тĕрмене хупса лартрĕç. Первомайск колонинче лашапа 4 çул вăрман турттарчĕ. «Ахалех лартрĕç ачана», – терĕç вара ял çыннисем.

Çапла асапланса, тертленсе пурăннă ял халăхĕ вăрçă вăхăтĕнче. Пур йывăрлăха та чăтса ирттернĕ, çĕнтерĕве кĕтсе илнĕ. Анчах яла кашни 3 çынран пĕри çеç сывă таврăннă. Нумайăшĕ вăрçă хирĕнче пуçĕсене хунă.

Вăрçă кашни çемьенех вилĕм илсе килчĕ. Кашни килтенех ывăлне, мăшăрне, аппĕне, тетĕшне çухатакансем пулчĕç. Пĕр килтенех вăрçă хирĕнче икшер е виçшер çынна çухатнисем те пайтах. Çăл Атăкра çак çемьесем:

Ершов Иван Петрович 1916–1942.
Ершов Николай Петрович 1918–1941.
Ершов Петр Петрович 1922–1942.
Михеев Егор Тимофеевич 1911–1944.
Михеев Федор Тимофеевич 1915-
Михеев Фома Тимофеевич 1902–1942.
Поляков Григорий Тарасович 1917–1945.
Поляков Максим Тарасович 1906–1943.
Поляков Михаил Тарасович 1919–1942.
Поляков Григрий Васильевич 1902–1943.
Поляков Самуил Васильевич 1904–1944.

Вавилов Василий Григорьевич 1914–1945.
Вавилов Аверкий Григорьевич 1906–1942.
Кириллов Николай Константинович 1920–1941.
Кириллов Егор Константинович 1923–1942.
Остроумов Гаврил Васильевич 1906–1945.
Остроумов Алексей Васильевич 1914–1944.
Пазитов Варфоломей Александрович 1919–1944.
Пазитов Роман Алксандрович 1906–1942.
Ягудин Петр Яковлевич 1910–1942.
Ягудин Василий Яковлевич 1916–1941.
Ярушкин Тимофей Яковлевич 1896–1942.
Ярушкин Николай Тимофеевич 1923–1942.
Карлинов Митрофан Петрович 1906–1943.
Яковлев Михаил Петрович 1903–1944.
Кундуков Василий Павлович 1917–1941.
Кундуков Николай Павлович 1918–1941.

*Ершов В. И.*

## ВĚСЕМ ВĂРÇĂРА КĚРЕШНĚ, ÇĚНТЕРŸÇĚ ПУЛСА ТАВРĂННĂ

### *ÇĂЛ АТĂКСЕМ*

Андреев Николай Николаевич
Антонов Василий Федорович
Антипов Иван Семенович
Антонов Григорий Федорович
Артемьев Александр Николаевич
Вавилов Герасим Григорьевич
Васильев Петр Арсентьевич
Васильев Порфирий Павлович
Ершов Иван Порфирьевич
Ершов Михаил Федорович
Емельянов Павел Васильевич
Иванов Григорий Тимофеевич
Ильин Федор Тимофеевич
Карзаков Василий Кузьмич
Карзаков Михаил Кузьмич
Карзаков Павел Кузьмич
Карзаков Роман Васильевич
Карзаков Степан Романович
Карлинов Петр Константинович
Карлинов Иван Авксентьевич
Кудряшов Николай Васильевич
Николаев Иван Яковлевич
Остроумов Николай Васильевич
Остроумов Николай Григорьевич
Прохоров Алексей Васильевич
Прохоров Василий Яковлевич
Пузырев Константин Матвеевич
Пузырев Иван Матвеевич
Поляков Никон Тарасович
Чурбанов Авраам Никитич
Чурбанов Егор Никитич
Чурбанов Николай Никитич

Чурбанов Иван Никитич
Чурбанов Кирилл Григорьевич
Чурбанов Сергей Егорович
Чурбанов Семен Михайлович
Чурбанов Тихон Харитонович
Чурбанов Василий Михайлович
Ягудин Андрей Данилович
Ярушкин Василий Тимофеевич
Карлинов Николай Яковлевич
Александров Илья Николаевич
Семенов Василий Данилович
Семенов Петр Данилович
Сергеев Дмитрий Николаевич
Ершов Василий Порфирьевич
Васильев Сергей Павлович
Яковлев Яков Константинович
Егоров Тихон Михайлович
Раевский Александр Николаевич
Михеев Михаил Тимофеевич
Ягудин Пантелеймон Артемьевич

## *АНАТ ТĂРМĂШСЕМ*

Петров Федор Михайлович
Павлов Василий Алексеевич
Павлов Алексей Павлович
Шашков Василий Николаевич
Моисеев Николай Александрович
Пешков Иван Андреевич
Иванов Василий Кузьмич
Тихонов Василий Егорович
Федотов Федор Вадимович
Путяков Антон Максимович
Васильев Василий Софронович
Путяков Сергей Авксентьевич
Едриванов Константин Захарович

И-42922



Национальная библиотека
Чувашской
Республики

Леонтьев Александр Филиппович
Ильин Илья прокопьевич
Гаврилов Петр Емельянович
Григорьев Петр Николаевич
Митрофанов Никифор М.
Петров Николай Яковлевич
Иванов Степан Иванович
Шагаров Захар Дмитиревич
Гаврилов Никифор Гаврилович
Петров Сергей Яковлевич
Капитонов Никон Семенович
Анисимов Петр Анисимович
Еремеев Дмитрий Моисеевич
Бурмистров Гаврил Николаевич
Иванов Алексей Поликарпович
Сидоров Илья Алексеевич
Едриванов Кузьма Павлович
Алжиков Александр Петрович
Едриванов Иван Павлович
Яковлев Андрей Николаевич
Иванов Никифор Константинович
Иванов Михаил Константинович
Иванов Илья Михайлович
Гаврилов Василий Филиппович
Фомин Владимир Ильич
Фомин Глеб Ильич
Фомин Илья Фомич
Алекссев Илья Григорьевич
Фадеев Вадим Николаевич
Фадеев Федот Николаевич
Сергеев Семен- Иванович
Едриванов Иван Аверкиевич
Гаврилова Евгения Емельяновна
Наумова Елена Владимировна

САЛТАК ÇЫРНĂ ВИÇ КĔТЕСЛĔ ÇЫРУСЕМ...

Акă Анат Тăрмăшри Сидоров Андрей Алексеевич çырăвĕсем. Вăл 1914 çулта çуралнă. Вăрçа Сидоров А.А. 1942 çулхи февралĕн 3-мĕшĕнче туса кайнă. 1942 çулхи май уйăхĕнчех хыпарсăр çухалнă. Унăн тăван килне, арăмĕпе ачисем патне янă икĕ çырăвĕ халĕ те Анат Тăрмăшĕнчи шкул музейĕнче упранаççĕ.

*«1942-мĕш çул, 22 февраль.*

*Пирвайхи йĕркерех юратнă юлташăм Елькка ачамсем Коляпа Зина манран инçетри кĕтесрен юратуллă ырлăх сунса салам. Малашне хамăн пурнăçа пĕлтерем. Кунтан виççĕмĕш çыру яратăп. ман пурнăç аван. Пулеметран пеме вĕрентеççĕ. Тумтирсем параççĕ. Тумтирсем аван тумлантарнă. Алса икĕ мăшăр. Апат енчен тоже аван. Кунне виçĕ хут яшка какайпа тата пулăпала. Петтясен Микулĕ начар тетчĕ те, кунта апла мар. Тата сирĕн пурнăçа пĕлес килет, анчах та пĕлме çук. Сан пурнăç питĕ начар пулмалла. Вутă тата апат енчен.*

*Сана Елькка çапла пурăнма хушатăп. Питĕ йывăрланса çитсен пиншака сут тата çуркунне çитсен атта. Ĕнене епле те пулсан усра. Хам таврăнсан пурнăç тăвăпăр, только сывлăх пултăр. Нумай çырма вăхăт çук, ху пĕлен кунта килте мар, кунта арминче. Пурте сехетпе, çывăрма та. 11 сехетрен пуçласа ирхине 6 сехетчен, тўррипе каласан 7 сехет çывăрсан ытти йăлтах вĕреннĕ çĕре каять.*

*Сывă пулăр. Хам та сывă пурăнатăп. Аллăрсене хытă чăмăртатăп, пурсăра та ыталаса чуптăватăп.*

*Сирĕн Ентюк.*

*Адрес çĕнĕ. г. Владимирск, Ивановский область п\ящ №136 Курсанту Сидорову Андрею Алексеевичу. Çыру ярăр».*

*«1942-мĕш çул, мартăн 3-мĕш кунĕ.*

*Паянхи кун килтен тухни пĕр уйăх тултарать. Çавăнпа та Елькка тата ачамсем сире пурне те салам тата малашне пурăнма сывлăх сунатăп.*

*Паян эпир вăрçă хирне аш-какай пулма тухса каятпăр. Çавăнпа та васкаса та пулин çырма тиврĕ.*

*Юратнă чунăм Елькка. Мĕнле уйрăлмалла пултăмăр-ши? Неужели сан ачусене хăвăнах пăхса ўстерме тивет-ши? Неужели ман юратнă арăм, Коляпа Зина тăлăха юлĕç-ши?*

*Çук ун пек пулма пултараймасть. Вăрçă хăрушă йывăрри пире тивет те, куççўлпе юхса кайăн.*

*Елькка манран тек çыру илеймесен тата пĕрре те хыпар пулмасан çапла пурăнма хушатăп. Пĕр çулталăксăр тата ... ан шутла, ачасене асту, анчах та питĕ йывăр пулать эпĕ вилсе выртсан.*

*Телей пирĕн пулĕ-ха, юратуллă чунсене уйăрма нимĕнле вăй та çук. Çавăн пекех эпĕр те сывлăх пулсан пĕрле пурăнăпăр. Пуçри те ăшри шухăшсем çавăн пек.*

*Элькка сана пурăнма питĕ йывăр. Хам таврăниччен чăтас пулать ĕнтĕ. Ним те тума çук. Питĕ аван тумлантарчĕç, сивĕ тивмелле мар.*

*Сире 4 çыру ятăм, хам пĕрре те илеймерĕм. Çак çырăва илсен çыру ан ярăр. Сывă пулăр чунăм Элькка, Коля, Зина тата тăванăмсем, кўршĕ-аршăсем пурсăра та ыталаса чуптăватăп. Элькка аллăна хытă чăмăртатăп. Часах çĕнтерў хыççăн килте савăнса калаçса тата мĕн курнине тата илтнине пĕрле сўтсе явăпăр. Килессе кĕтĕр Элькка, ан йĕр, ан хуйхăр.*

*Кĕтсе тăр эпĕ таврăнатăп, çыру ан ярăр».*

Ку Сидоров Андрей Алексеевичăн *(Сидоров Николай Андреевич ашшĕн О.Н.)* юлашки çырăвĕ. Сидоров А.А. арăмĕпе ачисене чăннипех те хытă юратни, вĕсемшĕн çунни курăнать çырура.

Анат Тăрмăшĕнчи Яковлев Иван Николаевич килне янă çыру та шухăша ярать. Вăл 1922 çулта çуралнă пулнă. «Астăвăм» кĕнекере 249-мĕш станицăра Яковлев И.Н. 1942 çулхи февраль уйăхĕнче хыпарсăр çухалнă тесе палăртнă. Кунта илсе кăтартнă çырăва вара 1942 çулхи апрелĕн 5-мĕшĕнче çырни паллă. Эппин «Астăвăм» кĕнекере çырни тĕрĕсех мар курăнать.

*<u>«Саламлă çыру.</u>*

*1942-мĕш çул, апрелĕн 5-мĕш кунĕ. Ну анне, инке, тете пысăк саламлă çыру ярататăп. Ку çырăва çырать кĕçĕн ывăлу Ванюк. Северо–Западный фронтран. Эпĕ пока паянхи кун сывă малалла пĕлместĕп. Эпĕ сире темиçе çыру та ятăм. Сиртен пĕр çыру та илеймерĕм. Лере те кунта та илеймен-ха. Ку çырăва илсен çыру çырăр. Ял хушшинчи хыпара пĕлтерĕр. Хăвăр мĕнле пурăнатăр. Выльăхсем пурăнаççĕ-и? Энтюк (Яковлев Андрей Николаевич, вăрçăран аманса таврăннă. О.Н.) çыру ярать-и, или киле таврăнчĕ-и? Маюк (Анисимова (Яковлева) Мария Николаевна (1916-1974çç.) О.Н.) епле пурăнать. Йыснасем (Анисимов Василий Анисимович 1915 çулта çуралнă, çырура каланă Маюкăн мăшăрĕ, вăрçăра 1943 çулхи май уйăхĕнче хыпарсăр çухалнă. О.Н.) çыру яраççĕ-и? Çырса пĕлтерĕр. Манпа пĕрле килнисем нумайăшĕ аманса, вилсе пĕтрĕç.*

*Пока сывă. Сире те Турă сывлăх патăр.*

*136-я полевая почтовая станция.*
*536-й стрелковый полк, 3-я минометная рота.*
*Яковлеву Ивану Николаевичу».*

Акă Çăл Атăк ялĕнче 1924-мĕш çулта çуралнă Прохоров Петр Васильевич çырăвĕсем. Вăл гварди сержант Тăван Çĕршывшăн паттăррăн çапăçса 1944 çулхи августăн 13-мĕшĕнче Польша çĕрĕ çинче пуçне хунă. Яла тăванĕсем патне янă çырăвĕсем шкул музейĕнче халĕ те тирпейлĕн упранаççĕ.

*«1943-мĕш çулта августăн 25-мĕшĕнче çыратăп çыру. Пирвайхи строкарах анне, Илле, инке, Марье, Васса, Елька, Миша, Рая сире пурсăра та пĕр сăмахпа питĕ пысăк та хĕрӳллĕ салам.*

*Малалла сире хамăн пурнăç çинчен çырса пĕлтерем. Эпĕ халĕ питĕ аван пурăнатăп. Апат питĕ аван çитереççĕ. А, кунсем, питĕ хаваслă иртеççĕ. Кунĕн-çĕрĕн купăс, музыка юрлать. Ташлама анчах пĕл. Анчах та 6-мĕш июльтенпе ташлама пĕлменнисем питĕ нумай пулчĕç. Эпир 7 чăваш ачинчен 2 чăваш ачи анчах юлтăмăр, а 5-ĕш ташлама пĕлмерĕç (вĕсем халь урăх тĕнчере). Эпир халĕ пĕр майлă пурăнатпăр. Эпир вĕсем çинчен килĕсене çырса пĕлтертĕмĕр, а пире никам та çырса пĕлтерекенсем те пулмĕ. Вот çапла пирĕн пурнăçсем.*

*Нумаях пулмасть аттрен и Симун Ваççинчен çыру илтĕм. Вĕсем тоже музыка итлеççĕ. Ну эпĕ урăх нимĕн те çырмастăп. Сахал та начар çырнă тесе ан калăр. Купăс сасси хăлхара, çавăнпа та çиччас урăх шухăш çине куçса каятăп. Ладно ан айăплăр.*

*Сире чунтан юратса и хисеплесе тата тепĕр хут питĕ пысăк та хĕрӳллĕ салампа саламлатăп. Манран хăвăр кӳршĕрсене тата тăвансене пурне те салам калăр.*

*Салампа сирĕн Прохоров Петр Васильевич. 25. VIII. -43. алă пуснă».*

*«Саламлă çыру. 12. II. _44г.*

*Пирвайхи строкарах анне и Илле сире иксĕре те питĕ пысăк та хĕрӳллĕ гвардейский салампа саламлатăп.*

*Манăн пурăнçсем иртнĕ çырусенхинчен нимĕнех те улшăну çуккă. Пурнăç яланах, кунран-кун пĕр майлă шăвăнать. Çаплах вăрçă пĕтес кун та çывхарать пулмалла, анчах та часах мар-ха, унччен пирĕн нумай ĕçлемелле-ха. Вăрçă пĕтсен, сывă юлсан киле те таврăнăп-ха. Кам пĕлет может быть вăрçă хирĕнче вилме те тивĕ. Ак халĕ аттерен уже 3-мĕш уйăх çыру илменни. Пĕлместĕп, те аманнă, те вилнĕ. Хам та çыру яраймастăп, мĕншĕн тесен адресне таçта çухатнă. Ситес çырупа çырса ярăр, атте киле çыру ярать или ямас. Эсир тоже çыру ямастăр или хут çук сирĕн или ахаль ямастăр. Манăн питĕ эсир мĕнле пурăннине пĕлес килет. Илле эсĕ халь те анне тесе чĕнместĕн пулĕ.*

*Эпĕ çавăнпа сырăва вĕçлетĕп. Сахал та начар çырнă тесе ан калăр. Сире хисеплесе тепĕр хут салам. Салампа Петя».*

*«Ырă кун, телейлĕ сехет.*

*Саламлă çыру.*

*Пирвайхи строкарах ним çырма пуçличчен «анне», тете и Илле сире виççĕре те пĕр сăмахпа питĕ пысăк та хĕрӳллĕ гвардейский саламп а саламлатăп. Эпĕ сирĕн 10-мĕш февральте янă çырăвăра паян кăнтăрла иртсен 4 сехетре илсе вуласа сирĕн пурнăçăр çинчен и эсир (Прохоров Алексей Васильевич О.Н.) киле таврăнни çинчен пĕлтĕм. Хĕпĕртенипе куçран куççӳлĕ тухрĕ. Вара çав минутранах сире хирĕç ответ парас терĕ, мĕншĕн тесен пирĕн передовоя каймалла çак каç. Çавăнпа сире пĕлтерес терĕм. Эпир нимĕçĕн II дивизи окружейный группировкине уничтожит тунă хыççăн пĕр эрнелĕхе канма тухнăччĕ. Вот халь каялла каятпăр. Аттерен тоже нумай пулмасть çыру илсе вуларăм. Паян сирĕн çырăвăрпа пĕрле виçĕ çыру илсе вуларăм. Анчах та çырма вăхăт питĕ кĕске. Ку çырăва та питĕ васкаса çыратăп.*

*Эх, юратнă тăвансем, тетем, хăçан сире курса, çуммăн или хирĕç тăрса калаçмалла пулĕ-ши? Çук, сывă юлсан та часах пулас çук.*

*Ну эпĕ çакăнпа çырăва вĕçлетĕп. Сахал та начар çырнă тесе ан калăр. Сире юратса тата тепĕр хут питĕ пысăк та хĕрӳллĕ саламп а саламлатăп.*

*Сиртен çыру кĕтетĕп. Адрес çавах. Саламп а сирĕн Петя.*

*6. 3. 44г.».*

*«13. 3. 44г.*

*...Эпир каллех вăрçă хирĕнче, нимĕçсене хамăрăн Тăван çĕр çинчен шăлатпăр. Акă эпир халь кив граница урлă каçса яланах, кунран-кунах малалла каятпăр.*

*Ну, Алексей Васильевич!!! Пока вăхăт панă чухне мĕнле кирлĕ çапла савăнăр, кулет тăвăр. Каялла кайсан часах савăнасси пулас çуккă...».* *(Кунта сăмах Прохоров Алексей Ваильевич пирки пырать. Прохоров А.В. унăн тетĕшĕ пулнă. Вăл 1944 çулхи март уйăхĕнче вăрçăран аманса таврăннă пулнă). О.Н.*

*«1944-мĕш çулта, 31-мĕш мартра çыру çыратăп. ...Эпĕ нумай вăхăт хушши çыру ямасăр тăтăм, мĕншĕн тесен вăхăт çавăн пек пулчĕ. Яланах малалла, яланах нимĕçсене хăвалатпăр. Эпир уже икĕ пысăк юханшыв фарсировать турăмăр: 1) Днепр, 2) Прут. Эпĕ I-мĕш Украинский фронтра служит тăватăп. Хаçатсем çинче пирĕн çинчен вулатăр пулĕ, ăçта çитнине. ...».*

*«1944-мĕш çулта, майăн 12-мĕшĕнче çыратăп çыру. ... Эпĕ пĕр уйăх ытла госпитальте выртрăм. Ĕнер, т.е. 11-мĕш майра каллех хамăр чаçе таврăнтăм. Вара тăруках 8 çыру илсе вуларăм, а сиртен виçĕ çыру. Вăл çырусене вуласан эпĕ те шухăша кайса питĕ хурлантăм. Анчах та, вăл, эсир асăннă сăмахсем пулас çуккă, пулас çук ку вăрçăран сывă юласси. Пулсан та часах мар. Ну вообщем турă мĕн çырнине курас пулать. Конечно, тăванăм, сире каллех илсе каяççĕ пулсан питĕ йывăр. Эпĕ сире çавăн пек ĕçре ĕçлесе урăх илмĕç-ха тесе пит хĕпĕртенĕччĕ. Ну ладно ялан хурланнипе те мар, урăх сăмах çине куçатăп.*

*1942-мĕш çулта ФЗО-ран таврăнсан пасара тухрăм. Пасарта çӳресен, çӳресен, мана пĕр палламан хĕр пырса алă пачĕ: «мĕнле пурăнатăн» тет. ФЗО-ри пурнăçсем çинчен ыйтса пĕлчĕ, и хăйĕн ятне каларĕ. Ку вăл Арапуç хĕрĕ Чиркова. Мана армине илсен тахшинрен ман адреса илсе мана çыру ячĕ. Вот çавăнтанпа вăл мана яланах çыру ярать, и хам та ярап. Ун çырăвне илсен эпĕ нимĕн те шухăшлама та пĕлместĕп, кулса та пăхап йĕрсе те пăхап тенĕ пек... Ман çинчен шухăшламасăр пĕр кун та иртмен пек çырать. Çыру чăнах та тăтăш ярать. Вăл çырать, что сирĕнпе тăван пекех калаçатпăр тет. Эсир каланă пулать, (Клавдине) ăна курсан мана курнă пекех туйăнать тесе. Чăнах та аван хĕр и вăл? Сирĕнпе мĕн калаçнине çырса ярăр.*

*Ну, çитĕ, темĕн те сӳпĕлтетрĕм. Сире хисеплесе тепĕр хут салам. Ăна та салам калăр. Салампа сирĕн юратнă шăллăр.* Алă пуснă*».*

*«14. VII. 44 г.*

*... Ну тете манăн питĕ ял хушшинчи пурнăçсем çинчен пĕлес килет. Çитес çырура тата ытларах çырса пĕлтерĕр. Çерукăн ури татăлса киле килмелле теççĕ. Чăн-и е чăн мар. И Нятюк Мишшапа çӳрет терĕç. Черт с ними. Сывлăх пулсан курăпăр. Только сывă юлма питĕ йывăр. ...Эпĕ тата .......... тытса кайнă тенине илтрĕм. Эпĕ уншăн питĕ хавас. Ял хушшинче савăнса пурăнни çитет. ........ та юн тăкса куртăр-ха».*

*«27. VII. 44 г.*

*...Эпир хальхи вăхăтра яланах наступать тăватпăр. Уже Буг и Сан шывĕсене те фарсировать турăмăр. Халь яланах малалла каятпăр. Ну вот манăн пурнăçра урăхран нимĕн те çук. ...».*

*«30. VII. 44 г.*

*... И манран, мана паллакан хĕрсене салам калăр. Ну, тете, эпĕ паян сиртен çыру илсе вуласа сирĕн пурнăçăрсене пĕлтĕм. Вара çийĕнчех пока вăхăт пур чухне çыру çырса ярас терĕм.*

*Эпĕ пока аван и сывлăхлă пурăнатăп. Ёнер аттерен те çыру илсе вуларăм, вăл та хальхи вăхăтра чупакан нимĕçсене йĕрлесе пырать. Эпир яланах малалла пыратпăр. Ак халь привал та, сиртен çыру илсе çырса ятăп. Хучĕ те чернилĕ те трофейский. ...Ну манăн пока сиртен нимех те ыйтмалли çуккă. Нятюк çинчен Кĕтерне аппасен Ваççи те кашни çырурах çырса пĕлтерет. Ну ладно, это не важно.*

*Эсир çырнă, что Илле (пирĕн) яланах салху сӳрет тетĕр. Мĕншĕн-ха вăл апла. Эпĕ ФЗО-ран таврăнсан вăл çав тери веселойччĕ. Яланах мана вăл култаратчĕ, И, вообще, выляма, кулма юрататчĕ. Ну халь мĕншĕн аплине нимĕн калама та пĕлместĕп. Эпĕ ФЗО-ра чухне вăл мана яланах çыру яратчĕ, а халь темшĕн ямас. Хăйне расна та нумай çыраттăмччĕ. Ну эсир, как нибудь, уншăн тăрăшăр. Ну тете манăн та сире çав тери курас килет. Ну вăхăтсăр нимĕн те тума çуккă. Турă сывлăх парсан хăçан та каллех пĕрле пурăнăпăр. ...».*

Прохоров Петр Ваильевич вăрçăра паттăррăн çапăçнă, ку унăн çырăвĕсенчен те аван курăнать. Вăл, ытти Совет салтакĕсем пекех Тăван Çĕршыва, тăван яла, тăванĕсемпе тус-юлташĕсене чунтан юратни курăнать. Кашни çырăвĕнчех вăрçă пĕтессе кĕтни, тăван яла таврăнса хăйĕн çывăх çыннисемпе тĕл пуласси çинчен ĕмĕтленнĕ вăл. Анчах та шăпи урăхларах килсе тухнă. Вăл тăван çĕре ирсĕр нимĕçсенчен тасатнă чухне ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă. Акă унăн тăван Çăл Атăк ялне янă юлашки çырăвĕ.

*«Письмо пущено 3-го августа.*

*Пирвайхи строкарах тете сире виççĕре те питĕ пысăк та хĕрӳллĕ салампа саламлатăп.*

*Паян маншăн хăрушă кун пулсан та, сиртен çыру илмесĕрех, сире аса илсе окопа кĕрсе ларса çыру çырма пикентĕм. Манăн пурнăçра ытлашши нимĕнех те улшăну çуккă. Эпир нимĕççене хăваласа уже Висла шывĕ патне çитрĕмĕр. Эпир уже Буг и Сан шывĕсем урлă каçрăмăр. Ну, тете питĕ вăрçă пĕтерсе киле сывлăхлă таврăнас килет. Анчах та мĕнле пулассине пока никам та пĕлес çук. Ну, тете эпĕ сиртен ыйтса пĕлесшĕн. Эсир член партине кĕнĕ-и е çук-и? и мана мĕнле хушатăн? çитес çырупа çырса яма ыйтатăп. Тата сире пĕр вăтанмасăрах çырса яратăп: Эпĕ Нятюка темиçе çыру та ятăм, анчах та эпĕ унран илеймерĕм. А Чиркована: «Манăн хут çук, урăх çыру çырма пултараймастăп» терĕм. Халь вăл пĕр тăрук 3-шер çыру ярать. (таса хут) и çырать, что «мана ан ман, эпĕ санăн ĕмĕрлĕхех» тет та. ыт. те. Ну манăн урăх нимĕн те çырмалли çуккă. Çак çырăва илсен*

*тӳрех ответ ҫырса яма ыйтатăп. Ҫак ҫыруран эпĕ сывă юлатăп. Ҫыру вĕҫленнĕ май сире тепĕр хут питĕ пысăк та хĕрӳллĕ салампа саламлатăп. Салампа сирĕн тăван шăллăр Петр Васильевич. 3. 8. 44. С приветом.* Алă пуснă».

Ҫырăва август уйăхĕн 3-мĕшĕнче ҫырса янă. Хăй вара, мухтавлă ентешĕмĕр, тепĕр вунă кунтан, август уйăхĕн 13-мĕшĕнче паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ.

Вăрҫă вăхăтĕнче ҫырусене вăрҫă цензури тĕрĕслени те курăнать. Кашни ҫыру ҫинех «Проверено военной цензурой» тесе штамп лартни пур. Ҫавăнпа та салтаксен ҫырăвĕсенче шахвăртарах ҫырнă вырăнсенчен нимĕн те тĕлĕнмелли ҫук.

Ҫăл Атăкри Чурбанов Василий Егорович та Тăван Ҫĕршыва хӳтĕлесе пуҫне хунă. Малтан вăрҫă ĕҫне вĕреннĕ, аслă лейтенант званине илнĕ, ун хыҫҫăн тăшмансемпе паттăррăн ҫапăҫнă. Унăн килне, вăрҫăри шăллĕ Чурбанов Сергей Егорович патне янă ҫырăвĕсем упранса юлнă. Вĕсенче пуринче те тăшмана курайманни, Тăван Ҫĕршыва чунтан юратни, ылханлă вăрҫă хирĕнчен сыввăн тухасси ҫинчен ĕмĕтленни курăнать.

*«20 апреля 1944г. Ырă кун!*

*Салам сире пурсăра та юратнă тăвансем, салам сана Миша.*

*Ĕнер эпĕ санăн ҫырăвна илсе вуларăм, уншăн сана питĕ пысăк спасибо. Ҫырăва вуласа тухнă хыҫҫăн сирĕн кильти пурнăҫăр ҫинчен пĕлтĕм. Эсир ҫыратăр, что пурнăҫ чаплах мар тесе. Да, Миша пурнăҫ начар, ним тума та ҫук, вăрҫă. Если колхозран тырă памарĕҫ пулсан эп виноват мар вĕт-ха. Эпĕ сирĕн пата январь уйăхĕнче икҫĕр (200) тенкĕ, февраль уйăхĕнче тăватҫĕр (400) тенкĕ укҫа ятăм, эсир вĕсене илтĕре, ҫук-и? Ĕнер Сережăран ҫыру илтĕм, сразу иккĕ (2), вăл ҫырать лайăх пурăнатăп тесе, уже вăл вăрҫăра пулнă. Эпĕ халь сиртен пит инҫе пурăнатăп, хамăр ҫĕр ҫинче мар, Румынинче вăрҫатпăр. Питĕ хĕрӳллĕ вăрҫă кунта. Урăх нимĕн те ҫырма ҫук. Сывă пулăр, Салам калăр пурне те. Миша мана пысăк командовани орден «Красная звезда» пачĕ. Салампа Вася».*

*«22 апреля 44г. Ырă кун.*

*Салам сире пурсăра та хăвăр тăванăр Василий Егоровичран. Миша санăн ҫырăвна 16-мĕш февральте ҫырнине паян илсе вуларăм. Ҫырăва вуласа тухнă хыҫҫăн тĕрлĕ хыпарсем пĕлтĕм.*

*Паян тата Сергейрен ҫыру илтĕм. Вăл госпитальте выртать, аманнă. Вăл ҫапла ҫырать: «Что манăн пуҫа, хулпуҫҫине минăн (снаряд) осколки лекрĕ, тата урана мина (снаряд) ҫĕмĕрнĕ, утса*

*çӳреме кансĕр. Манăн урана чĕркуççинчен аялтан татнă». Да, тăвансем, Миша, вăрçă ним тума та çук, питĕ шалкă ăна, çамрăк ача урасăр тăрса юлчĕ. Если киле таврăнсан пăртак каннă хыççăн, пускай вĕренме каять, çта та пулсан. Урăх нимĕн те çырмалли çук. Сывă юлăр, эпĕ те сывă юлатăп. Халь эпĕ тăшман çĕрĕ çинче Румынире вăрçатăп. Ответ кĕтетĕп. Салампа Вася».*

*«28 июля 1944г. Здравствуй, брат Сережа.*
*Шлю тебе свой пламенный и боевой привет.*

*Сережа, сегодня т.е. 28.07.44г. получил от тебя письмо. За которое очень благодарю. Прочитав письмо узнал про твою жизнь и здоровье. ...Ты спрашиваешь: «Ехать без протеза или с протезом». Обязательно (протез ларт çӳреме лайăх пулать. Если халь протез лартмасан, то кайран хĕнь пулать). Сережа, ты сильно так не унижай себя. Ты пишешь: «Я без ноги. Теперь отец и мать не примут, и не будут ухаживать и кормить». Нет, нет не расуждай так. Ты инвалид Великой Отечественной войны. Примут. Ты Сережа постарайся учиться, если трудно будет в материальном обеспечении, то я буду помогать, пока я жив. Да, Сережа, война, а война без жертв никак не может быть. Держи себя спокойно, не волнуйся. Если ты будешь учиться, то ты будешь человеком, я в этом помогу тебя.*

*Я пока живу хорошо, здоровье тоже хорошее. Плохо, что от отца не получил ни одного письма, не пишет, почему не знаю. Вот почти все, наверное. Досвидания. С приветом твой родной брат Ст. л-нт. Вася. Привет всем твоим друзьям и тем, которые тебя лечат. Жду ответа. 28.07. 44г. Полевая почта 11077Б».*

Чурбановсем çемьерен виççĕн Аслă вăрçăра çапăçнă. Ашшĕ тата икĕ ывăлĕ, Василийпе Сергей. Сергей Егорович вăрçăра урине çухатсан, тетĕшĕ Василий Егорович, уншăн еплерех пăшăрханнине çак çыру тăрăх та аван куратпăр. Шăллĕпе тетĕшĕ пĕр-пĕрин патне тăтăшах çыру çырнă, вĕсенче кашнинчех тăшмана хăвăртрах çĕнтерсе мирлĕ пурăнçпа пурăнассишĕн ĕмĕтленни курăнать. Анчах та Чурбанов Василий Егоровичăн 23 çултах (1922 çулта çуралнă) пурнăçран уйрăлма тивет. Çĕнтерӳ патнелле ниме пăхмасăр талпăннă ентешĕмĕр, 1945 çулхи майăн 9-мĕш кунне темиçе кун кăна кĕтсе илеймест, 1945 çулхи апрель уйăхĕнче хыпарсăр çухалать.


ПОЧТОВАЯ
Куда
Кому
Адрес отправителя
Воин
упантам!
Полевая почта
ПОЧТОВАЯ КАРТОЧКА
Куда
Кому
АДРЕС ОТПРАВИТЕЛЯ
Полевая почта
должны очистить советскую землю
ской нечисти.
(Сталин)

Акă тепĕр çыру. Кăна 1940-мĕш çулта Хĕрлĕ Çар ĕретĕнче тăнă Осипов Федор Васильевич тăван килне амăшĕ, арăмĕпе (Осипова Ксения Федоровна. О.Н.) ачисем патне Анюкпа Альтук патне янă пулнă. Çыру Çăл Атăк ялĕнчи Осипова Евдокия Федоровнан килĕнчи архивĕнче упранать. Ашшĕ çырăвне хĕрĕ тăтăш уçса вулать. Вăл 1937 çулта çуралнăскер ашшĕне салтака илсе кайнине аран çеç астăвать.





| число | пакетов | Кому адресовано | Число пакетов | Расписка в приеме |
|---|---|---|---|---|

Осипов Федор Васильевич 1913 çулта çуралнăскер вăрçă умĕн салтак тивĕçне пурнăçланă пулнă. Вăрçă пуçлансанах вăл чи хаяр çапăçусене лекнĕ. Хаяр вăрçăн малтанхи кунĕсенчех, 1941 çулхи июль уйăхĕн 9-мĕшĕнче çапăçура вăл паттăрсен вилĕмĕпе вилет. Ăна Мурманск облаçĕнчи Мишуково-Титово тӳпемне пытарнă.

*Ветерансен çырăвĕсем тăрăх*
*Н.Н. Осипов хатĕрленĕ. 2010ç.*

# ÇĔНТЕРĔВЕ ТУПТАКАНСЕМ

## ИЛЬИН
## ФЕДОР
## ТИМОФЕЕВИЧ



1942 çулхи август уйăхĕ. Хаяр вăрçă шавĕ иккĕмĕш çул кĕрлет ĕнтĕ. 1924-мĕш çулта çуралнă çамрăксене çара илме пуçларĕç. Эпĕ ун чухне 18 çул тултарнăччĕ. Часах повестка килсе пачĕç те çара илчĕç. Малтанах Канаш хулинче тăракан 136-мĕш запасри полка ячĕç. Кунта çамрăк салтаксене вăрçă техникине вĕрентрĕç. Пирĕн ялтан манпа пĕрле П. И. Ширтанов, И. М. Иванов вĕренчĕç. 1942-мĕш çулхи декабрь уйăхĕнче пире фронта ăсатрĕç. Эпĕ Ленинград фронтне лекрĕм. Ладога кӳлли урлă пăр тăрăх 50–60 çухрăм çуран утса каçрăмăр. Пире тĕрлĕ çĕре салатрĕç. Эпĕ 142-мĕш тинĕс пехотин бригадине, 1-мĕш батальона лекрĕм. Эпĕ связист пултăм. Рота командирĕ патĕнчен штабпа çыхăну тытаттăмăр. Пирĕн батальон Шлиссельбург крепоçĕ патĕнчен тăшманпа кĕрешсе Нева шывĕ урлă каçрĕ, блокадăна татрĕ. Çак çапăçура мана амантрĕç. Ленинградри пĕр госпитальте выртрăм. Сурансем тӳрленсе çитсен, мана каллех фронта ячĕç. «Синявино» шурлăхĕ патĕнче оборонăра тăтăмăр, ун хыççăн Кронштад крепоçĕ çывăхне куçарчĕç. Çак плацдарма пĕр уйăх хушши хӳтĕлерĕмĕр. Ун хыççăн наступленине куçрăмăр. Ропша, Красное село, Кингисен хулине, Туляково тăвĕсене фашистсенчен тасатрăмăр, Карели перешеекĕ текен вырăна çитрĕмĕр. Кунта Выборг хулине тăшмансен-

чен тасатрăмăр. Тăшмана Ленинград патĕнчен каялла хăваласа янă хыççăн пĕр уйăх кантарчĕç. Унтан 1-мĕш Украина фронтне ячĕç. Польша чикки урлă каçрăмăр. Кунне 30–40 çухрăма яхăн тăшмансене хăваласа пыраттăмăр. Польшăра Сосновец, Котовец, Краков хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусене хутшăнтăмăр. Германи чиккине çитрĕмĕр, Висла шывĕ урлă каçрăмăр, Дрездена илсе Одер шывĕ хĕррине тухрăмăр. Вăрçă чарăннă вăхăтра Чехословакинчи Наход хулинче пултăмăр.

Вăрçă чарăннă хыççăн та Совет çарĕнчех юлтăмăр. Чехословакинче, Австринче, Венгринче тăракан Совет çарĕсен ĕретĕнче пултăм. Киле 1947-мĕш çулхи март уйăхĕнче çеç таврăнма май килчĕ.

Хальхи вăхăтра «Знамя» колхозра ĕçлетĕп.

*Ильин Михаил çырса илнĕ. 1978ç.*

## ВАСИЛЬЕВ ПОРФИРИЙ ПАВЛОВИЧ



Чăваш халăхĕн хастар ывăлĕ Васильев Порфирий Павлович вăрçă çулĕсене мухтавлăн утса тухнă. Акă мĕн каласа парать вăл Тăван Çĕршыва хӳтĕлесе тăшманпа хастаррăн кĕрешни çинчен.

«Мана 1942 çулхи мартăн 1-мĕшĕнче çара илчĕç. Часах фронта ăсатрĕç. Кунта эпĕ 2-мĕш № пулеметчик пултăм. Эпĕ хамăн пулеметпа Тула, Смоленск, Орел хулисене ирĕке кăларнă çĕре хутшăнтăм. Фашистсемпе хастаррăн кĕрешнĕшĕн 6 медаль илме тивĕçлĕ пултăм.

Фашистла Германие çапса аркатнă хыççăн пирĕн чаççене Инçет Хĕвелтухăçне куçарчĕç. Кунта Япони захватчикĕсене хирĕç кĕрешрĕмĕр. Японие парăнтарнă хыççăн, 1945 çулта, киле таврăнтăм, паянхи куна çитиччченех «Знамя» колхозра ĕлерĕм.

*Ершов Н.И. çырса илнĕ. 1978ç.*



## КАРЗАКОВ ПАВЕЛ КУЗЬМИЧ

1941-мĕш çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче фашистла Германи пирĕн Çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнса кĕчĕ. Пĕтĕм халăх Тăван Çĕршыва хӳтĕлеме çĕкленчĕ. Мана 1941 çулхи кĕркунне çара илчĕç. Смоленск облаçне илсе кайрĕç. Кунтах пĕрремĕш хут хаяр вăрçă вут-хĕмĕпе паллашма тиврĕ. Çак кĕрешӳре эпĕ пуçран амантăм. Мана тылри госпитале ăсатрĕç. Горький хулинче госпитальте 5 уйăх выртрăм. Йăлтах сывалса çитиччен киле ячĕç. Килте икĕ уйăх пурăнсан, 1942 çулта каллех фронта тухса кайрăм. Каллех Смоленск облаçне килсе тухрăм. Кунта иккĕмĕш хут çапăçăва кĕтĕм. Маншăн ку çапăçу та ăнăçлă пулмарĕ, алла çапса хуçрĕç. Горький çывăхĕнчи госпитальре чылайччен выртрăм. 1943 çулта çапăçăва юрăхлă çын мар тесе, киле ячĕç. Кун хыççăн вăрçа юрăхлă çын пулаймарăм.

Фронтра кĕрешнĕшĕн мана çакăн пек медальсем пачĕç: 50-лет Вооруженных сил СССР, 25-лет победы в Великой

Отечественной войне, 30-лет победы в Великой Отечественной войне, За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941–1945гг, За доблестный труд в ознаменовании 100-летия со дня рождения В. И. Ленина.

*Антипова Ирина çырса илнӗ. 1978ç.*



## ОСТРОУМОВ НИКОЛАЙ ВАСИЛЬЕВИЧ

1941 çулхи августăн 17-мӗшӗнче эпӗ вăрçа тухса кайрăм. Малтанах Горкий облаçӗнче йӗркеленнӗ 312-мӗш артиллери полкне илчӗç. Эпӗ оруди командирӗччӗ. Часах пирӗн полка фронта ăсатрӗç. Волхов фронтне çитрӗмӗр. Мга патӗнче мана амантрӗç. Часах сывалса тухрăм. Кайран Балтика тинӗсӗн çыранӗсем тăрăх, Эстонире, Латвинче çапăçрăмăр, вăл çӗрсем çинчен фашистсене хăваларăмăр, Рига хулишӗн хаяр кӗрешӳсем пулса иртрӗç. 1944 çулхи октябрь уйăхӗнче пирӗн разведкăна каймалла пулчӗ тата фашистсен пулемет точкисене çӗмӗрмеллеччӗ. Эпир задание ăнăçлах пурнăçларăмăр, анчах фашистсем пăрахнă граната осколокӗ (ванчăкӗ) мана амантрӗ. Мана юлташсем госпитале илсе кайрӗç. Çак çапăçура хастарлăх кăтартнăшăн мана «Хастарлăхшăн» (За отвагу) медаль пачӗç, тав турӗç.

Госпитальтен сывалса тухнă хыççăн Рига хулинче запас полкра тăтăмăр. Кунта мана минометчиксен командирӗ Пулма вӗрентрӗç, кӗçӗн сержант звани пачӗç. 191-

мĕш стрелковой полкри 201-мĕш дивизине ячĕç. Латвинче Жугости патĕнче çапăçăва кĕтĕмĕр. Станковой пулеметпа фашистсене ăшаларăм. Анчах çак çапăçура мана каллех амантрĕç. Çапăçури паттăрлăхшăн «Вăрçăра палăрнăшăн» (За боевые заслуги) медальпе наградăларĕç. Сывалса тухнă хыççăн унчченхи 191-мĕш полках таврăнтăм.

1945 çулта Гандава хулине танк десанчĕ ячĕç. Кунта та эпĕ хутшăнтăм. 1945 çулхи майăн 11-мĕшĕнче хулана ирĕке кăлартăмăр. Çакăнтах вăрçă пĕтни çинчен пĕлтĕмĕр. Пирĕн ротăра 16 çын çеç юлнăччĕ. Вăрçă чарăннă хыççăн пирĕн полка Афганистан чиккине ячĕç. Пире ваттисене, киле ямалла турĕç. Çапла эпĕ киле таврăнтăм.

*Остроумова Вера çырса илнĕ. 1978ç.*

## КАРЗАКОВ СТЕПАН РОМАНОВИЧ



Вăрçă!.. Тăван Çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăрсан, пĕтĕм Совет халăхĕн пĕр ĕмĕт, пĕр шухăш пулнă: хамăрăн Çĕршывăмăр-аннемĕре тăшман кулли тума памалла мар, фашистсене çапса аркатмалла. Эпĕ те 1942 августăн 24-мĕшĕнче çулхи юлташсемпе Ильин Ф. Т. Карлинов И. И. (Маттӳç аппан шăллĕ) вăрçа тухса кайрăм. Малтанах çамрăк боецсен курсĕнче вĕрентĕмĕр. Вара пире те, чăваш ачисене, ытти тăванла халăхсемпе пĕрле Ленинграда илсе

кайрĕç. Ленинград блокадăра пулнă, поездсемпе унта пырса кĕме май пулман. Ладога кӳлли урлă çуран каçмала пулчĕ. Ленинград блокадине сирессишĕн кĕрешнĕ. 142-мĕш тинĕс бригадинче пулнă, минометчик пулса çапăçнă. 8-мĕш ГЭС, Синявино шурлăхĕнче тата ытти çĕрте кĕрешнĕ, çăмăллăн аманса та курнă. Пĕррехинче пире, сержанта тата тăвată боеца разведкăна ячĕç. Фашистсен пулемет точкине салатса килмелле пулнă.

Çапла вара пирĕн салтаксем, тĕттĕм çĕрпе усă курса, Нева юханшывĕн юппин çыран тĕпĕпе пырса, нимĕçсен малти линийĕ патне пырса тухаççĕ. Фашистсен пулемечĕсене граната пăрахса сирпĕтнĕ хыççăн каялла таврăнмалла пулчĕ. Анчах часах çутăлма пуçларĕ. Çак самантра фашистсен снайперĕсем пире асăрхарĕç те пеме пуçларĕç. Нева юханшывĕн юппи урлă каçнă чух пăр çинче пĕр чăваш ачине амантаççĕ. Эпĕ ăна перевязка тума пулăшрăм. Анчах çакăн хыççăнах инçе те мар снаряд ӳксе çурăлать. Унăн ванчăкĕсем мана та амантрĕç. Çак осколок халĕ те пуçра ӳт ăшĕнче ларать. 3 сутка юр ăшĕнче шăнса выртрăм. Мана Ленинграда илсе тухса госпитале вырттарчĕç. урана операци туса татса пăрахрĕç. Киле инвалид пулса таврăнтăм.

Вăрçăри паттăрлăхшăн мана «Отечественная война» орденпе тата медальсемпе наградăларĕç.

*Карзаков Борис çырса илнĕ. 1978ç.*

**ПУЗЫРЕВ**
**КОНСТАНТИН**
**МАТВЕЕВИЧ**



Хаяр тăшмансем Совет Союзĕ çине сĕмсĕррĕн тапăнса кĕнĕ хыççăн эпĕ ялта нумаях пурăнаймарăм. 1941 çулхи августăн 31-мĕшĕнче ял-йыш мана фронта ăсатрĕ. Первомайскинчи райвоенкоматран ун чухне фронта каякансене Йĕпреçе лашапа ăсататчĕç. Команда пухăнасса кĕтсе Йĕпреçре 2 сутка, Канашра 5 сутка пурăнмалла пулчĕ. Кунтан Тула облаçĕнчи Ефремова хулине илсе кайрĕç. Унта вăрçă искусствине вĕрентрĕç. Çакăнтах пире нимĕçсем çавăрса илчĕç. Пирĕн окруженинчен тăшманпа кĕрешсе тухмалла пулчĕ. Октябрĕн 14-мĕшĕнче окруженинчен тухрăмăр. Калинин облаçĕнчи Ржев хулине çитсе чарăнтăмăр. Наступление хатĕрленме пуçларăмăр. Унтан Ржев патĕнче наступленире мана амантрĕç. Госпитальрен сывалса тухсан каллех Чăваш республикине запас полка илсе килчĕç. Ку полка Финлянди патне пăрахрĕç. Кунта оборонăра тăтăмăр. Пĕр çапăçура каллех амантрĕç. Икĕ енчи хул пуççине те фашист пуллисем амантрĕç. Госпиталь. Унтан татах фронт. Эпĕ кунта артбатальонра надсмотрщик (ручной пулеметчик пултăм).

1945 çулхи апрелĕн 9-мĕшĕнче Япони пусмăрçисене хирĕç кĕрешме илсе кайрĕç. Кунта оборонăра та наступ-

ленинче те тăма тӳр килчĕ. Çак вăхăтра аслă Отечественнăй вăрçă чарăнчĕ.

1945 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕнче киле ячĕç. Декабрĕн 5-мĕшĕнче киле çитрĕм.

Медальсем: «За отвагу», «За победу над Германией», «За победу над Японией» т. ыт. те.

*Яковлев Анатолий çырса илнĕ. 1978ç.*

## КАРЗАКОВ РОМАН ВАСИЛЬЕВИЧ

Карзаков Роман Васильевич икĕ пысăк вăрçă вучĕ витĕр тухнă. Вăл Çăл Атăк ялĕнче 1899 çулхи ноябрĕн 12-мĕшĕнче çуралнă. Турханти шкулта икĕ класс вĕренсе пĕтернĕ.

Ачалăхĕ унăн тертлĕ пулнă. Вăл 14 тултарсан, ашшĕ вилсе кайнă. Хуçалăхри мĕнпур арçын ĕçĕ ун çине тиеннĕ.

1918 çулта ăна граждан вăрçине илеççĕ. 151-мĕш полкра Хĕвеланăç фронтĕнче шурă поляксемпе çапăçать вăл. Ку вăрçăра 1921-мĕш çулччен çапăçать. Киле таврăнать, анчах нумайччен пурăнаймасть. Ăна каллех çара илеççĕ. Вăл Чĕмпĕрте тата икĕ çул службăра тăрать.

Пĕр тапхăр çĕршыв мирлĕ пурнăçпа пурăнать. Анчах капитал тĕнчи çĕр çинче социализм çĕршывĕ вăй илсе пынипе килĕшсе ларма пултараймасть. Вĕсем пирĕн Тăван çĕршыв çине тапăнсах тăраççĕ. Фашистла Германи Совет çĕрĕ çине тапăнса кĕрсен, Карзаков Роман Васильевича каллех çара илеççĕ. 1942 çулхи августранпа вăл каллех çарта. Вĕсене вĕрентеççĕ те Горькинчи вăрçă заводне сыхлама яраççĕ. Каярахпа вăл колонинче (пиртен инçех мар) сыхлакан пулать. Кунта 1946 çулхи декабрь уйăхĕччченех пулать. Халь Карзаков Р.В. пенсионер, 79 çул тултарать.

*Карзаков Борис çырса илнĕ. 1978ç.*

## АНДРЕЕВ
## НИКОЛАЙ
## НИКОЛАЕВИЧ



1942 çулхи августăн 12-мĕшĕнче фронта тухса кайрăм. Иваново облаçне çитрĕмĕр. Кунта Гороховецкий лагерьте 203-мĕш артиллери полкĕнче вĕрентрĕç. Телефонист пулнă. 1943 çулхи майăн 15-мĕшĕнче фронта илсе кайрĕç. 3-мĕш Прибалтика фронтĕнче нимĕç захатчикĕсемпе кĕрешрĕм. Августăн 24-мĕшĕнче ураран аманса, малти лини çинчен тухмалла пулчĕ. Верхотури госпиталĕнче выртрăм. 1944 çулхи апрельччен сурансене тӳрлетсе каннă. 1944 çулхи апрель уйăхĕнче фронта тухса кайрăм. 782-мĕш стрелковый полкра отделени командирĕ туса хучĕç. Унтан артиллери ĕçне çине тăрсах вĕренме пуçларăмăр. Т-34 танк çинче те тăшмана пăскăртма тĕл килчĕ. Эпĕ кунта танк çинчи орудин командирĕччĕ. Çĕнтерĕве Нижний Тагилта кĕтсе илтĕмĕр.

*Л. Н. Андреева çырса илнĕ. 1978ç.*

## ЕРШОВ
## ИВАН
## ПОРФИРЬЕВИЧ



Вăрçă пуçлансанах фронта тухса кайрăм. Пĕрремĕш наступленине Курск облаçĕнче кĕтĕм. Белово хулишĕн хаяр кĕрешӳ пырать. Ку хула темиçе хутчен те алран алла куçрĕ. Курск çывăхĕнче, вăрманта, пĕр хаяр тытăçу вăхăтĕнче мана амантрĕç (контузи). Пĕр çулталăка яхăн госпитальте выртрăм. Сывалса тухнă хыççăн Каменец-Подольск, Могилев-Подольск направленийĕпе Бессарабие çитнĕ. Кун хыççăн Румыние фашистсенчен тасатнă, Дунай шывĕ урлă каçса Югославие çитсе çапăннă. Кунта питĕ пысăк çапăçусем пулса иртеççĕ. Белград хулишĕн те юнлă çапăçу пычĕ. Белград урамĕнче йывăр амантрĕç. Пульă витĕрех шăтарса тухса кайрĕ. 8 уйăх хушши госпитальте выртмалла пулчĕ. Госпитальтен тухсан фельдшерсен курсне вĕренме ячĕç. Кунтан вĕренсе тухсан вăрçă чарăнчĕ. Вăрçă хыççăн темиçе уйăх эвакогоспитальте ĕçлерĕм, унтан киле таврăнтăм.

*Ершов Н. И. çырса илнĕ. 1978ç.*

## ЕРШОВ МИХАИЛ ФЕДОРОВИЧ



1941 çулхи сентябрĕн 11-мĕшĕнче мана çар ĕретне илчĕç. Тула облаçĕнчи военкомата ячĕç. Тула хули çывăхĕнче Тесницки лагерĕнче 97-мĕш хими батальонĕ йĕркеленчĕ. Вăрçă хатĕрĕсене турттаракан 4-мĕш ротăра тракторисчĕ эпĕ. Вăл рота 97-мĕш ОБХО-на кĕретчĕ. 97-мĕш батальона йĕркелесе çитерсен, ăна Косая Гора, Криволучи хулисене, каярахпа Тулăна куçарчĕç. Тулăшăн пулса иртнĕ хаяр çапăçусем хыççăн (нимĕçсем хулана çаплах илеймерĕç), пире Саратов хулине куçарчĕç. Кунта батальона тепĕр хут (формировать) турĕç, йĕркелерĕç. Мана 8-мĕш техбригадăри 23 техбатальонти 1-мĕш ротăна автомобиль водителĕ пулма ячĕç. ЗИС-5 «Студебекер» машинасемпе çўрерĕм. Нимĕç фашисчĕсен çарĕсем Мускав патне çывхарсан, правительствона Куйбышев хулине куçарчĕç. 8-мĕш техбригадăна Совет правительствине сыхлама, ăна хăрушсăрлăхсăр ĕçлеме майсем туса пама хушнă. Кунта бригада виçĕ уйăх пурăннă. Кун хыççăн бригадăна Хĕвеланăç фронт распоряженипе Каро-Фоминск хулине яраççĕ. Кунта эпир фрончĕпех чапа тухнă М–30 реактивлă установкăсен («Катюшăсен») водителĕсем пулса кĕрешрĕмĕр. Пирĕн çарсем Мускав патĕнче фашистсене çапса аркатнă хыççăн хĕвеланăçнелле ăнăçлăн наступлени туса пычĕç. Можайск, Вязьма, Сафаново, Дрогобуч, Ярцево, Смоленск, Рудия, Витебск, Полоцк, Минск т. ыт.

те фашистсен аллинчен туртса илчӗҫ. Кара-Фоминскран пуҫласа Калининграда ҫити мухтавлӑ ҫул утса тухрӗҫ. Калининград ҫывӑхӗнче 8-мӗш техбригадӑна салатса яраҫҫӗ. Эпӗ 4-мӗш техбригадӑри 10-мӗш батальонри 2-мӗш ротӑна лекрӗм. Каллех водитель. Ҫунса кӗлленнӗ, арканнӑ хуласемпе ялсем витӗр тухрӑмӑр. 1945 ҫулхи сентябрӗн 25-мӗшӗнче киле ячӗҫ.

Киле 1945 ҫулхи ноябрӗн 14-мӗшӗнче ҫитрӗм. Смоленск патӗнче аманса госпитальте выртса тухрӑм.

Медальсем: «За победу над Германией в Великой Отечественной войне 1941–1945 гг.», «20-лет победы в Великой Отечественной войне», «30-лет победы в Великой Отечественной войне», «50-лет вооруженных сил СССР», «25-лет победы в Великой Отечественной войне».

Эпир, аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ ветеранӗсем, ҫӗр ҫинчи мӗнпур халӑха вӑрҫа хирӗҫ кӗрешме, мирлӗ пурнӑҫ туса хума чӗнетпӗр.

*Михеев Леонид ҫырса илнӗ. 1978ҫ.*

# СЕМЕНОВ ПЕТР ДАНИЛОВИЧ



1942 çулхи çуркунне. Пирĕн полк Курск-Белгородск сăртĕнче оборона тытать. Фашистсем икĕ енчен батальона хĕссех пыраççĕ. Анчах вĕсем пирĕн çарсене хĕссе кăларма пултараймарĕç. Пирĕн пехота тăшмана Хĕвеланăçнелле аякка хăваласа кайрĕ, тылран уйрăлчĕ. Патронсем, снарядсем пĕтсе çитрĕç. Фашистсем пире çавăрса илме шутларĕç. Анчах пĕтĕм халăх пире пулăшма çĕкленчĕ. Стариксем, хĕрарăмсем, ачасем михĕсемпе патронсем снарядсем çĕклеме пуçларĕç. Гитлерăн планĕ пурнăçа кĕреймерĕ.

Пирĕн çарсем наступленине куçса, хирĕç тăнине курмасăрах Румыни хулине Яссана ярса илчĕ. Анчах фашистсем Ясса çине пысăк çарсем ячĕç. Вăйсем тан мар пирки пирĕн салтаксен хуларан тухса каймалла пулчĕ. Хула çывăхĕнче оборонăра уйăха яхăн тăмалла пулчĕ. Фашистсем атака хыççăн атака турĕç. Çак вăхăтра эпĕ ялта пулеметчиксен ротине вĕрентрĕм. Хаяр çапăçăва хатĕрлентĕмĕр.

Кĕтнĕ кун çитрĕ. 1944 çулхи августăн 20-мĕшĕнче ирхи шăплăха «катюша» залпĕсем вăратрĕç. Унтан пур орудисем те кĕрлеме пуçларĕç. Хăлхасенче кĕрлесе çеç тăчĕ. Сехетрен пирĕн пехота наступление çĕкленчĕ. Яссана каялла илтĕмĕр те тăшмана малалла хăваласа кайрăмăр. Пĕр кунтах 50 çухрăм ытла куçрăмăр.

*Семенова Маринăпа Ягудина Лариса*
*7-мĕш класра вĕренекенсем çырса илнĕ. 1978 çул.*

# ВАВИЛОВ ГЕРАСИМ ГРИГОРЬЕВИЧ



Эпĕ 1941 çулта вăрçа тухса кайрăм. Вăрçă пуçлансан, 15 кун çеç килте пурăнтăм. Июлĕн 6-мĕшĕнче ялтан фронта ăсатрĕç. Ку вăрçă пуçланиччен эпĕ инçетри Хĕвелтухăç чиккинче пограничник пулнăччĕ. Çавăнпа пире нумаях та вĕрентсе тăмарĕç, Мускав патне илсе кайрĕç. Мускавшăн пыракан çапăçусене хутшăнтăм. «За оборону Москвы» медаль илме тивĕçлĕ пултăм. Декабрĕн 26-мĕшĕнче Мускавран инçех мар вырнаçнă Калинин хулишĕн çапăçрăмăр. Çавăнта мана йывăр амантрĕç: ура шăммине салатса пăрахрĕç. Ун хыççăн госпитальре 3 уйăх та 3 кун выртрăм. Март вĕçĕнче мана госпитальрен кăларчĕç те эпĕ киле таврăнтăм. 3-мĕш групăри инвалид пулса пурăнтăм. Ялта колхозра ĕçлерĕм, вăй çитнĕ таран фронта пулăшма тăрăшрăм. Колхозра хастар ĕçленĕшĕн «Вăрçă вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн» (За доблестный труд) медаль пачĕç. Вăрçă вăхăтĕнче «За отвагу» медаль илнĕччĕ. Вăрçă хыççăн ытти медальсем те пачĕç.

Хальхи вăхăтра килте пурăнатăп, пенсионер.

*Ярушкин А. çырса илнĕ. 1978ç.*

## ЧУРБАНОВ
## КИРИЛЛ
## ГРИГОРЬЕВИЧ



Вăрçă пуçланас умĕн, 1940 çулта, эпĕ Хĕрлĕ Çарта службăра тăраттăм. Тинĕс Çар флотне лекнĕччĕ. Пирĕн полк Ярославль хулинче тăратччĕ. Вăрçă çак вăхăтра пуçланчĕ те. 1942-мĕш çулта пире Севастополе илсе кайрĕç. Фашистсемпе хаяр тытăçусем пулчĕç. Севастополе хăварнă хыççăн 1942 çултах Ленинград патне куçарчĕç, унтан Сталинград патĕнче пултăмăр. Днепр, Висла, Одер шывĕсем тăрăх ишрĕмĕр, тăшмансене Минск хулинчен, Польшăран тасатрăмăр. 1943 çулта, йывăр аманнă хыççăн, Куйбышеври госпитальте 6 уйăх хушши сиплентĕм, унтан киле килсе кайрăм. Одер шывĕ тăрăх вăрçă катерĕсемпе Берлин патне пырса тухрăмăр. Вăрçа вара Берлинта пĕтертĕмĕр.

1945 çулхи хĕлле киле таврăнтăм. Халĕ пенсионер.

*В. Ершов çырса илнĕ.*

## ЕРЕМЕЕВ ДМИТРИЙ МОИСЕЕВИЧ



Хĕрлĕ Çар ĕретĕнче тăрассине кашни çамрăках пысăк тивĕç тесе шутлатăп. Эпĕ те 1939 çулта çар службине хĕпĕртесех кайрăм. Службăна Польша чиккинче Белоруссире пуçларăм. 1941 çулта укреплени тăвакан района куçарчĕç.

Вăрçă пуçланас умĕн шăматкун пирĕн полка Чучень ятлă местечкăна кино курма илсе кайрĕç. Эпĕ дневальнăй. Казармăра тăратăп. Чӳречесем уçă. Мотор шавĕсем илтĕнеççĕ. Старшинана тăратса çакăн çинчен пĕлтертĕм. «Вĕрентӳ пырать пулĕ», – терĕ вăл. 3 сехетре юлташсем киноран таврăнчĕç. 4 сехетре сасартăк кĕрлени илтĕнсе кайрĕ. Бомбăсем шăхăрса ӳкме, шартлатса çурăлма пуçлаççĕ. Артиллерирен пени илтĕнсе каять. «Тревога! Тревога!» – янраса каять команда. Хĕвĕшӳ, чупкалани! Казармăн пĕр кĕтесси снаряд лекнипе йăтăнса анчĕ, казарма тĕтĕмпе, тусанпа тулса ларчĕ. Эпир оборона линийĕ патне çитрĕмĕр. Çĕр касрăмăр. Çав вăхăтра капитан Жаков фашист çарĕсем пирĕн çĕр çине 300-350 çухрăма яхăн кĕрсе кайни çинчен пĕлтерет. Минск енелле чакма пуçларăмăр. Минск çунать. Эпир Минск çывăхĕнчи вăрманта чарăнтăмăр. Минскра фашистсемччĕ ĕнтĕ. Эпир тылран Минск çине наступлени тума шутларăмăр. Çак çапăçура мана контузи пулчĕ. Эпĕ тыткăна лекрĕм, лагере

хупса хучӗҫ. Тыткӑна лекнӗ вырӑс врачӗсем аманнисене мӗнле май килнӗ ҫапла пулӑшу параҫҫӗ. Вӗсем мана та сывалма пулӑшрӗҫ. Эпӗ лагерьте пӗр уйӑх та пилӗк кун пурӑнтӑм. Кунне икӗ хут баланда ҫитеретчӗҫ. Ӑна та пӗр ҫӗртен тӑкса паратчӗҫ те, хӗвӗшӳ пуҫланатчӗ вара, апатне илме те ҫукчӗ. Лагерьтен Германие ӑсатрӗҫ. Эпӗ лагерьте Валиуллин тутарпа паллашрӑм. Унпа лагерьтен тухса тарма шутларӑмӑр. Лагерӗн пӗр енче ҫырма юхса выртатчӗ. Ун хӗрринче пралук карта пурччӗ, варринче вара – уҫӑ вырӑн. Эпир шыв урлӑ каҫма шутларӑмӑр. Ҫак каҫ тӗттӗм пулчӗ, ҫумӑр ҫӑватчӗ. Патруль аяккарах кайсан, асӑрханса шыва кӗтӗмӗр. Шыв урлӑ чиперех каҫса кайрӑмӑр. Улӑх урлӑ каҫса вӑрмана кӗтӗмӗр. Умра пӗр ял асӑрхарӑмӑр. Унта ҫитсе пӑхма шутларӑмӑр. Лӑпам урлӑ каҫса сӑрт ҫине хӑпартӑмӑр. Унта нимӗҫ машини, ун сывӑхӗнче 3 нимӗҫ салтакӗ тӑраҫҫӗ. Вӗсем пире ярса илчӗҫ те, машина ҫине лартса каялла лагере илсе кайрӗҫ. Кунта подвала хупса хучӗҫ. Алӑк патӗнче ларатпӑр. Вӗлерессе пӗлетпӗр ӗнтӗ. Икӗ хутччен унтан кӑларса допрос турӗҫ. Лагерь варринче площадка пурччӗ. Унта фашист офицерӗсем тухса калаҫатчӗҫ, приговорсем вуласа паратчӗҫ. Акӑ пире те салтӑнтарчӗҫ, аялти кӗпесемпе ҫеҫ хӑварчӗҫ. Приговор вуласа панӑ хыҫҫӑн вӗлерме илсе кайрӗҫ. Ҫул ҫинче Валиуллин тӑрӑнса ӳкрӗ. Ӑна нимӗҫ салтакӗсем тӑратасшӑн тапкаласа илчӗҫ. Вӑл тӑраймарӗ, вара фашистсем ӑна персе пӑрахрӗҫ. Мана юри ҫынсене вӗлерме тунӑ площадкӑна илсе кайрӗҫ. Эпӗ хама вилӗм кӗтекен вырӑналла утатӑп. Хыҫалта сас илтӗнми пулчӗ. Пуҫа кӑшт ҫеҫ пӑрса каялла ҫаврӑнса пӑхатӑп. Нимӗҫ кукленсе ларнӑ та автомачӗпе тем аппаланать. Хӑвӑртрах утма пуҫларӑм. Пралук урлӑ (площадка йӗри-тавра тытнӑччӗ) сиксе каҫрӑм та курӑк ҫине лап ӳкрӗм. Нимӗҫ пеме пуҫларӗ, пульӑсем пуҫ урлӑ шӑхӑрса вӗҫсе иртеҫҫӗ. Эпӗ сиксе тӑтӑм та вӑрмана тапса сикрӗм. Каҫчен вӑрманта лартӑм. Унтан тӑрса утрӑм. Малта ҫутӑсем курӑнкалатчӗҫ.

Пытăм. Шаккатăп. Алăка пĕр старик уçрĕ. (Каярахпа вăл партизансен связнойĕ пулчĕ). Вăл манран ăçтан килни, кам пулни çинчен ыйтса пĕлчĕ. Кунта 25–27 çулхи хĕрачасем пурччĕ. Ырă кăмăллă карчăкĕ апат çитерчĕ, тумтирсем тупса пачĕ. Старик мана партизансене шырама хушрĕ. Унтан çул кăтартса ячĕ. Вăрманта поселок вырнаçнă. Унта партизансем çинчен калаçкалаççĕ. Эпĕ хĕрринчи çуртри старикпе калаçрăм. Вăл пĕр-икĕ эрне каялла партизансем кунта пулни çинчен каласа кăтартрĕ. Çул хĕррине тухса пытанса тăма хушрĕ. Кунта чăнах та партизансемпе тĕл пулма тӳр килчĕ. Горький вырăсĕ Шилов пурччĕ. Вăл мана «земляк» теме пуçларĕ. Асли Юрченко, вĕсем 12-ĕн, эпĕ 13-мĕшĕ пултăм. Вĕсем мана çав старик патнех илсе килчĕç те, вăй илмелле 10-12 кун пурăнма хушрĕç. 12 кунтан вĕсем мана кунтан илсе кайрĕç. Ялта эпĕ çынсене витресем тĕплесе параттăм, каткасем тăваттăм, çынсене çапла пулăшаттăм. Халĕ ĕнтĕ эпĕ партизан.

Пĕрремĕш операци. Шоссе хĕррине засадăна тухрăмăр. Манăн кунта автомат тупмалла.

Çул тăрăх фашистсен колоннисем иртсе каяççĕ, анчах пирĕн вĕсемпе тытăçма вăй пĕчĕкрех. Ире хирĕç çул çинче пĕччен машина курăнса кайрĕ. Автоматран çатăртаттарса илтĕмĕр. Машина кювейта кĕрсе ӳкрĕ. Унтан виçĕ фашист хăйсем валли вилĕм тупрĕç. Вĕсен хĕçпăшалĕсене илсе лагере таврăнтăмăр. Ку Минск-Бобруйск шоссе çинчи пĕрремĕш операци пулчĕ. 1941 çулта партизансен йышĕ пысăках пулман пирки пысăк операцисемех тăвайман-ха.

1942–1943 çулсенче партизансем вăй илчĕç. 1945-мĕш çулта отрядран бригада туса хучĕç. Унта 6 отряд пĕрлешрĕç. Юрченко вилнĕ хыççăн пирĕн отряд командирĕ Ребров пулчĕ. Штаб начальникĕ – Нечаев. Пирĕн отряда Юрченко отрячĕ тесе чĕнме пуçларĕç.

1942-мӗш ҫулта эпӗ подрывниксен ушкӑнӗнче кӗрешрӗм.

1942-мӗш ҫулта темиҫе операцие те хутшӑнма тиврӗ. Пӗррехинче ҫул ҫине тухрӑмӑр та масхалатсемпе юр ҫинче выртатпӑр. Лавсем килни курӑнса кайрӗ. Нимӗҫсем йӑлтах чӗркенсе ларнӑ та, куҫӗсем ҫеҫ курӑнаҫҫӗ. Лавсем ҫине сиксе лартӑмӑр та 13 лава лагере илсе кайрӑмӑр. Лавсем ҫинче апат-ҫимӗҫ пулчӗ. Ҫыннисем отрядра ҫеҫ тӑна кӗчӗҫ.

Пирӗн отрядра питӗ паттӑр ҫынсем пурччӗ. Акӑ Роман (летчик пулнӑскер) фашистсенчен машинине туртса илет те, машина ӑшне кӗрсе ларса, Шоровка ялне нимӗҫсем тӑнӑ ҫӗрех пырса тухать, вӗсен часовойӗсем патӗнчен иртсе, кӗпер урлӑ тӗрлеттерсе каҫса каять, хамӑр тӑнӑ вырӑна чиперех ҫитет.

Тепрехинче «чӗлхе» тытса килмелле пулчӗ. Тӑваттӑн кайрӑмӑр. Чӗлхе тытса килтӗмӗр. Нумай операцисене хутшӑнма тиврӗ. 3 хутчен засадӑна лекрӗмӗр.

1944 ҫулта отряд хӗрлӗ ҫарпа пӗрлешрӗ. Минска илнӗ ҫӗре хутшӑнтӑмӑр. Ун хыҫҫӑн пӗр уйӑх кантарчӗҫ. Эпӗ хама хӑтаракан старик патӗнчех кантӑм.

Унтан Хӗрлӗ Ҫар ӗретӗнче 1945 ҫулхи январӗн 15-мӗшӗнче Висла шывӗ хӗрринче наступление куҫрӑмӑр. Ку наступлени вӑхӑтӗнче манӑн икӗ ура та аманчӗ. Брест госпиталӗнче 4 уйӑх выртрӑм. Госпиталь хыҫҫӑн Одер шывӗ хӗрринчи плацдарма илтӗмӗр те апрелӗн 16-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем наступление куҫрӗҫ. Ку ҫапӑҫура эпӗ тепре амантӑм. Сулахай аларан амантрӗҫ. Каллех госпиталь, ултӑ уйӑх выртса тухрӑм. 1946 ҫулта январь уйӑхӗнче киле килтӗм.

*Фомина Любовь ҫырса илнӗ. 1978ҫ.*

# КАПИТОНОВ НИКОН СЕМЕНОВИЧ



Капитонов Никон Семенович фронта 1941 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухса каять. Вăл Мускав облаçĕнче йĕркеленĕ 2-мĕш миномет полкне лекет (1-мĕш полка чапа тухнă Флеров капитан ертсе пынă). Ку вăл вăрçăра чапа тухнă «катюшасен» полкĕ пулнă. 1941 çулхи сентябрĕн 3-мĕшĕнче вĕсем Украninăра фашист салтакĕсемпе техники пухăнса тăнă вырăна пĕрремĕш залп параççĕ. Кун хыççăн та чылай çапăçусенче пулаççĕ. 1942-мĕш çулхи июль уйăхĕнче фашист самолечĕсем пирĕн «катюшасене» йĕрлесе тупаççĕ те бомбăсем тăкма пуçлаççĕ. Сиенленсе пĕтнĕ «катюша» установкисене сывлăша сирпĕтсе яма тивнĕ. Полкран сывă юлнă 144 çын Майкопа çитиччен çуран утаççĕ.

Белореченская станцинче вĕсене каллех «катюшасем» параççĕ. Туапсе патĕнче пирĕн çарсем наступление куçаççĕ. Мухтавлă «катюшасем» Краснодара, Донбаса, Перекопа, çавăн пекех Мелитополь, Симферополь, Севастополь хулисене ирĕке кăларнă çĕре хутшăнаççĕ. Севастопольрен вĕсене Мускава кăлараççĕ те унтан Орша-Витебск енне яраççĕ.

Капитонов Н. С. Гварди старшина Хĕвелтухăç Пруссирех хаяр тăшмансемпе кĕрешет. Кенигсберг, Мельзак хулисене ирĕке кăларнă çĕре хутшăнать.

1945 çулта вĕсене Инçет-Хĕвелтухăçне куçараççĕ. Катюшасем Манчжурире те тăшмана аркатаççĕ.

Капитонов Н.С. паттăрлăхшăн Хěрлě Çăлтăр орденě тата нумай медальсем илме тивěçлě пулнă. Аслă командовани ăна 11 хутчен тав тунă.

Вăрçăран таврăнсан вăл Анат Тăрмăшěнчи 8 çул вěренмелли шкулта ачасене вěрентсе пурăннă. Халě Капитонов Н. С. тивěçлě канура.

*«Авангард» хаçатăн*
*1978-мěш çулхи майăн 18-мěш кунěнче*
*В. И. Ершов статьинчен илсе çырнă.*

## АНИСИМОВ ПЕТР АНИСИМОВИЧ



Анисимов Петр Анисимовича 1940 çулта Çара илеççě. 1942 çулта Сталинград патне вăрçа илсе кайрěç. Днепр патěнчи çапăçура мана икě хут амантрěç: сылтăм ураран тата пуçран. Госпитальре выртса тухмалла пулчě. Кунти полевой госпитальте сывалтăм. Кайран, госпитальтен тухнă хыççăн, мана кěçěн лейтенант звани пачěç.

Эпě нумай çěрте çапăçрăм. Сталинград хулине, Днепра, Румыние, Украинăна, Беларусие, Югославие ирěке кăларассишěн кěрешрěм.

Эпě киле 1953 çулта таврăнтăм.

Вăрçăра çěршывшăн хастар кěрешнěшěн мана правительство 4 медаль парса чыс турě. Эпě тăван çěршыв умěнче хамăн ята ямарăм.

*Анисимов П. А.*

# ЕГОРОВ ТИХОН МИХАЙЛОВИЧ



Виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ хаяр вăрçă шавĕ кĕрлет. Тăшман пирĕн Çĕршыва шалран шала кĕрет. Ял хумханулла шăплăхра. Августăн 31-мĕшĕнче Егоров Тихон Михайлович фронта тухса каять. Канашран вĕсене Тула облаçĕнчи Ефремова хулине илсе каяççĕ. Кунта запасри стрелковый полк йĕркеленнĕ. Кунта нумаях тăратмаççĕ, кашнинех винтовка, 250 патрон, икшер граната валеçсе параççĕ. Вĕсене çар тумтирĕсем те паман пулнă-ха. Кунтан вĕсене Мускав çывăхĕнчи Орехово-Зуево патне илсе тухаççĕ. Унтан Горькие куçараççĕ. Горькинчен çуранах Етĕрне хулине килме тухаççĕ. Çул çинче Егоров Т. М. чирлесе ӳкет те хăйсен командинчен тăрса юлать. Пĕр ялта çĕр каçать. Куславкари больницăна лекет. Хăйĕн полкне вăл Шупашкар çывăхĕнчи Алкешево ялĕнче хăваласа çитет. Кунта салтак тумтирĕсем параççĕ. Тумтирĕсем хĕллехисем пулнă, урисене тăхăнма ботинкăсем параççĕ. 3-4 кунтан Вăрмар станцине, унтан каллех Мускава илсе каяççĕ. Мускав çывăхĕнчи Клин хулинче пĕрремĕш çапăçăва кĕреççĕ. Кабанова ялне ирĕке кăлараççĕ. Нумай çухатусем пулнă. Полка тепĕр хут йĕркелесе Ленинград фронтне ăсатаççĕ. Кунта Егоров Т. М. пĕрремĕш хут аманать. Пуля çурăмран кĕрсе янах айĕнчен тухса каять. Ӳпкене амантать. Ивановăри госпитальте выртать. 1942 çулхи февралĕн 28-мĕшĕнче сывалса тухать. Ржев хули патĕнче пулеметчик пулса çапăçать.

Пĕррехинче Егоров юлташĕпе дежурствăра пулнă. Фашистсен разведки килсе тухнă. Вĕсене асăрхаса пулеметран пеме пуçлаççĕ. Тепĕр кунне нимĕçсем çак вырăна тупăсенчен пеме пуçлаççĕ. Пĕр снаряд Егоровсем тăракан дзота пырса ўкет. Юлташĕ вилет, Егорова вара сывлăш хумĕ дзотран кăларса ывăтать. Ăна урăх полк санитарĕсем илсе каяççĕ. Çавăнпа хăйсен полкĕнче вилнĕ тесе шутлаççĕ, килне вилни çинчен çырса пĕлтереççĕ. Егоров полевой госпитальте уйăх та 6 кун выртса тухать, полкне таврăнать. Кунта ăна курсан тĕлĕнсех каяççĕ. Каллех юнлă çапăçусене хутшăнать. 1942 çулхи августăн 28-мĕшĕнче Зубцова хули çывăхĕнче урараn аманать. Ăна инçетри тыла ăсатаççĕ. Курганри госпитальте выртать. Операци туса осколоксене кăлараççĕ. Темиçе уйăхран çак облаçри Медвежье ятлă курорта яраççĕ. Уйăх хушши сывлăхне çирĕплетнĕ хыççăн каллах фронта яраççĕ. Ку хутĕнче полкра çамрăксемпе аманнисем пулнă. Полка артиллери генералĕ килнĕ. Вăл 450 çын суйласа илнĕ. Вĕсен хушшине Егоров Т. М. та лекет. Чеберкультен вĕсен полкне Курск-Орлов пĕккине илсе пыраççĕ. Çак пĕкĕре Егоров Т. М. телефонист-артиллерист пулса кĕрешет. Фашистсене çапса аркатнă хыççăн Польша çĕрĕ çине пырса тухаççĕ, Висла хĕррине çитеççĕ. Вислан хĕвел анăç енче çирĕпленсе ларнă фашистсен çарĕсемпе кĕрешеççĕ. Нимĕçсем хĕснипе кунтан темиçе хут та тухса чакма тивет. Юлашкинчен вĕсене хăваласа кăлараççĕ те наступление куçаççĕ. Люблин хулине ирĕке кăлараççĕ. Ун хыççăн Варшавăшăн кĕрешў пырать. Висла тата Варшава патĕнче кĕрешнĕшĕн, паттăрлăх кăтартăншăн Егорова медальсемпе наградăлаççĕ. Егоров хамăрăн мухтавлă çарсемпе Берлин урамĕсенче кĕрешет. Уншăн та медаль илме тивĕçлĕ пулать. Çĕнтерў кунне Егоров Т. М. Берлинра кĕтсе илет. 1945 çулта тăван килне таврăнать, тăван колхозра ĕçлеме пулать. Халь Егоров Т. М. пенсионер.

*Сергеев Н. çырса илнĕ. 1978ç.*

# ШАШКОВ ВАСИЛИЙ НИКОЛАЕВИЧ



Ялти икĕ çамрăк качча Шашков Василий Николаевич тата Васильев Василий Софронович 1942 çулхи февралĕн 5-мĕшĕнче ял-йышпа сывпулашса Тăван Çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн тăшманпа кĕрешме тухса каяççĕ. Дивизи Улатăр хулинче йĕркеленнĕ. Май уйăхĕнче вăл Воронеж фронтне çитсе тухнă. 1942 çулхи октябрь уйăхĕнче аманать. Госпитальте икĕ уйăх çурă выртса тухнă хыççăн хăй тĕллĕн çӳрекен (самоходный артиллерийский полк) 140-мĕш артиллери полкĕнче пулнă. Пирĕн ентеш кунта авăрлаканни пулнă. 1943 çулта Курск тата Белгород хулисемшĕн пынă çапăçусене хутшăннă, Харькова, Молдавие ирĕке кăларнă çĕрте çапăçнă. Румыни, Болгари, Венгри çĕршывĕсем урлă, фашистсене хăваласа, хаяр кĕрешӳсенче малалла, Хĕвел анăçнелле куçса пынă. Чехословакин тĕп хулине Прагăна ирĕке кăларнă çĕрте пулнă. Кунта вĕсем майăн 8-мĕшĕнче çитсе тухнă, майăн 9-мĕшĕнче вăрçă чарăннă.

Шашков В. Н. «За боевые заслуги», «За взятие Будапешта», «За освобождение Праги», «За победу над Германией» медальсем илме тивĕçлĕ пулнă. Тĕрлĕ хуласене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусене хутшăннăшăн 9 хутчен ăна Аслă командовани тав тунă.

Вăрçă чарăнсан Шашков В. Н. киле таврăннă. Халĕ вăл Шăхачри йывăç япаласем тăвакан комбинатра аслă бухгалтер пулса ĕçлет. Ку ĕçре вăл 25 çул хушши пĕр улшăнмасăр ĕçлет.

*Шашков В. çырса илнĕ. 1978ç.*

## ВАСИЛЬЕВ ВАСИЛИЙ СОФРОНОВИЧ



Малтанхи çапăçура эпĕ 1941-мĕш çулхи çулла Кăнтăр Хĕвеланăç фронтĕнче пултăм. Ун чухне пирĕн рота 796-мĕш стрелковăй полк составне кĕретчĕ. Воронеж хули çывăхĕнчи Масловка ялĕшĕн пуçланнă çапăçура сулахай аларан аманса госпитале лекрĕм. Госпитальрен тухсан Çурçĕр Хĕвеланăç фронтне лекрĕм.

Фронта кайиччен эпĕ полк шкулĕнче вĕрентĕм, сержант звани илтĕм. Латышсен 45-мĕш уйрăм гварди пулемет батальонне лекнĕччĕ, отделени командирĕ пулнăччĕ. Ильмень кӳлли çывăхĕнче сылтăм алă тунинчен каллех осколок лекрĕ, çăмăл контузи пулчĕ. Кун хыççăн икĕ хут опреаци турĕç. Госпитальрен 1943-мĕш çулхи августра киле ячĕç.

Вăрçă вăхăтĕнче пĕр медаль илтĕм, кайран 7 медаль пачĕç.

*Иванов Вячеславпа*
*Григорьев Алексей çырса илнĕ. 1978ç.*

## ПУТЯКОВ СЕРГЕЙ АВКСЕНТЬЕВИЧ



Эпĕ вăрçă пуçланас умĕн Минск хули леш енче вĕçев взводĕнче службăра тăраттăм. Ирхине, июньĕн 22-мĕшĕнче, машинасем çине бомбăсем тиеттĕмĕр. Икĕ машина çине тиесе пĕтертĕмĕр çеç, нимĕçсен самолечĕсем вĕçсе килни курăнчĕ. Вĕсем бомбăсем тăкма пуçларĕç. Манăн юлташсем лупашкасене тарса пытанчĕç. Эпĕ, каярах тухнăскер, тарса ĕлкĕреймерĕм те каялла склада кĕрсе кайрăм. Телее, склада бомба лекмерĕ. Фашистсен самолечĕсем вĕçсе кайсан, аэродрома бомбăсем çакма илсе кайрĕç. Аэродром 5 çухрăмраччĕ. Аэродрома та нимĕç самолечĕсем бомбăсемпе ишсе хăварнă.

Çав вăхăтра эпĕ чирлесе ӳкрĕм. Пĕр уйăх госпитальре выртнă хыççăн хамăрăн чаçе каялла таврăнтăм.

Пĕррехинче наступление кайрăмăр, анчах вăйсем тан мар пулнă пирки чакма тиврĕ. Нумай юлташсене çухатса хăвартăмăр. Хамăрăн орудисем патне çитсен, пеме тытăнтăмăр. Анчах нимĕçсен танкĕсем пире хупăрласа илчĕç. Çакăнта эпĕ плена лекрĕм. Лагере хăваласахупрĕç. Апат çук, шыв çителĕклĕ мар. Çынсем вилеççĕ. Вырăнти халăхсем пире çăкăр парасшăн, анчах нимĕçсем пире вĕсем патне ямаççĕ, тӳрех персе вĕлереççĕ.

Пĕррехинче эпир пĕр юлташа улма хуппи илме ятăмăр, хамăр ăна кĕтсе тăратпăр. Кĕтсе илеймерĕмĕр. Ăна ярса тытнă иккен. Вара строй умĕнчех çакса вĕлерчĕç. Кун хыççăн улма хуппи патне кайма пăрахрăмăр.

Пирĕн салтаксене Хĕвеланăçнелле хăваласа кайма пуçларĕç.

Вĕт улма çитерчĕç, вăл та пулин çитмесчĕ. Пĕррехинче мунча кĕме илсе кайрĕç. машинасем урама лартнă икĕ пысăк чан патне пырса чарăнчĕç. Пире строя тăратрĕç те чана кĕртсе кăларма тытăнчĕç. Çанталăкĕ сивĕ тăрать. Йăлтах шăнса кайрăмăр.

Пире Бухенвальд лагерне илсе çитерчĕç. Эпир шахтăра ĕçлеттĕмĕр. Йывăр ĕçе чăтаймасăр нумай салтак вилсе пĕтрĕ. Урасене тăхăнма йывăç тĕплĕ колоткăсем паратчĕç.

Пĕр кунхине пире ирех тăратрĕç те таçта илсе кайма пуçтарăнчĕç. Ăçта илсе кайнине никам та пĕлмест. Çĕрле. Тĕттĕм. Пĕр вырăнта чарса тăратрĕç. Умра – тарăн çырма аялта çерем. Çак çырма тĕпĕнче çĕр каçрăмăр эпир. Ирхине шоссепе малалла хăваласа кайрĕç. Кăнтăрла пире татах чарса тăратрĕç те выртса канма хушрĕç. Эпир тăсăлса выртрăмăр, нимĕçсем апат çиме пуçларĕç. Асли велосипедпа таçта кайса килчĕ. Вара пире тăма хушрĕç. Анчах вĕсем пире ниçта та илсе каймарĕç. Шоссепе США çарĕн танкĕсем килни курăнса кайрĕ. Танксем çитсен нимĕç-конвоирсем аллисене çĕклерĕç. Анчах хăшĕ-пĕри вăрмана тарса пытанчĕç. Танкистсем пире нимĕçсене шырама вăрмана илсе кĕчĕç. Анчах аслă конвоирне тупаймарăмăр. Американецсем пире хамăр енне ăсатрĕç. Кунта ыйтса пĕлнĕ хыççăн тепĕр хут службăна ячĕç. Вăрçă хыççăн пĕр çул службăра пултăм. 1946 çулта киле таврăнтăм. Вăрçăра кĕрешнĕшĕн 6 медальпе наградăларĕç.

*Гаврилова Валя çырса илнĕ. 1978ç.*

## НИКОЛАЕВ
## ИВАН
## ЯКОВЛЕВИЧ



1941 çулта, Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан, ялти мĕнпур арçын çĕршыва тăшманран хӳтĕлеме тухса кайрĕ. 1942 çулхи февраль уйăхĕнче эпĕ те çара тухса кайрăм. 1238-мĕш стрелковăй полкра вăрçа кĕтĕмĕр. Тăшманпа нумаях та çапăçаймарăмăр, мартăн 16-мĕшĕнче (1942ç.) мана сылтăм питрен йывăр амантрĕç. 2 сехет тăна çухатса выртнă. Кун хыççăн сылтăм куç курми пулчĕ. Пĕр уйăхранах суран тӳрленчĕ. Госпитальте выртнă чухне апендицитпа чирлерĕм, мана операци турĕç. 354-мĕш эвакогоспитальте майăн 2-мĕшĕнчен пуçласа 1942 çулхи июлĕн 8-мĕшĕччен выртрăм. 1942 çулхи август уйăхĕнче киле ячĕç. Пĕр çулталăк килте пурăнтăм. Ун хыççăн мана Урала ĕçлеме илсе кайрĕç. Уралта çулталăк ытла ĕçлесе пурăнтăмăр. Вăрçă чарăнас умĕн мана отпуска ячĕç. Эпĕ отпуска килнĕ вăхăталла вăрçă чарăнчĕ те мана текех ĕçлеме ямарĕç.

*Ягудина Л. çырса илнĕ. 1978ç.*

## ПЕТРОВ НИКОЛАЙ ЯКОВЛЕВИЧ



Кашни ялшăн, хулашăн хаяр çапăçусем пыратчĕç. Эпир, Совет салтакĕсем, кашни метр çĕре хӳтĕлеме хатĕрччĕ. Эпĕ вăрçăн малтанхи уйăхĕсенченех фашистсемпе çапăçма хутшăнтăм. Великие Луки, Невель хулисене хӳтĕленĕ çĕре хутшăнтăм, 1941 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче амантăм. Хамăр çарсемпе, фашистсем хĕссе пынипе каялла чакса пыма тиврĕ. Чакнă маях тăшманпа час-часах тытăçусенче пулма тӳр килетчĕ. Торопец станцийĕ, Вязьма, Ярцево, Гжадск, Ржев, Погорелый, Зубцово хулисемшĕн пынă çапăçусене хутшăнтăм.

1941 çулхи апрель уйăхĕнче çар службине килнĕскер, эпĕ çакăн пек юнлă çапăçусенче пуласса асра та тытман. Артиллери чаçĕнче службăра тăраттăм.

Великие Луки патĕнче аманса госпитальрен сывалса тухнă хыççăн 1941 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа 1942 çулхи апрель уйăхĕччен Ивановăри политруксем хатĕрлекен шкулта (училищĕре) вĕрентĕм. Вара политрук звани тата должноçĕ илнĕскер малалла çапăçрăм.

Вăрçă çулĕ çинчех хамăрăн ентеше, Совет Союзĕн Геройне Винокурова Сычевка хулинчен икĕ çухрăмра, вăрман хĕрринче тирпейлесе пытарса хăвартăмăр. Вăл ун чухне полковникчĕ.

1942 çулхи апрель уйăхĕнчен пуçласа тĕрлĕ фронтсенче çапăçрăм. Çурçĕр Хĕвеланăç, Калинин, Хĕвеланăç фрончĕсенче пултăм. Çăмăл аманнисем пулчĕç, анчах каш-нинчех сурансем тӳрленсе çитнĕ-çитмен фронта кайнă, çапăçăва кĕнĕ. 1944 çулхи февраль уйăхĕнче йывăр аман-тăм. Госпитальтен вара текех фронта ямарĕç.

Аслă Отечественнăй вăрçăра хастарлăх кăтартнăшăн мана «Хĕрлĕ çăлтăр» орденпа тата медальсемпе наградă-ларĕç.

*В. Ершов çырса илнĕ.*

## ГАВРИЛОВ ПЕТР ЕМЕЛЬЯНОВИЧ



Çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăрсан, эпĕ те повестка илсе фронта тухса кайрăм. Пире Тула облаçĕнчи Ефремка хулине илсе кайрĕç. 4 уйăх вĕреннĕ хыççăн фронта ăсатрĕç. Орел хули патĕнче 2 уйăх çапăçрăмăр. Унтан Тула хулине хӳтĕлерĕмĕр. Унта нимĕçсен наступленине чарса лартрăмăр, вĕсене хăваласа пырса Брянска çитрĕмĕр. Ряжскинче госпитальре выртрăм. 1942 çулхи май уйăхĕнче Сталинград патне илсе килчĕç. Унта эпир 7 уйăх çапăçрăмăр.

Пĕррехинче эпир окопра нимĕçсен полковникне тытрă-мăр. Ăна штаба эпĕ илсе кайрăм.

Тепрехинче пирĕн 22 катюша çĕрĕпе тăшман çине печĕ. Тепĕр кунне нимĕçсен 50 яхăн самолечĕ вĕçсе килчĕ те бомбăсем тăкма пуçларĕ. Эпĕ пĕр шăтăка кĕрсе выртрăм. Йĕри-тавра бомбăсем çурăлаççĕ. Хăрушă! Çак налет вăхăтĕнче питĕ пысăк çухату тўсрĕмĕр. Нумай юлташ вилсе выртрĕ.

Сталинград патĕнче мана каллех урараран амантрĕç. Госпитальре чылай выртрăм. Ура чĕркуççи таранах шыçса, çĕрсе кайрĕ. Операци туса осколока кăларчĕç.

Тепĕр хут Беларусинче Витебск хулишĕн пынă çапăçура йывăр амантăм. Вара Улатăрта госпитальте выртрăм.

1946 çулхи август уйăхĕнче киле таврăнтăм.

*Гаврилов Владимир çырса илнĕ. 1978ç.*

## ЯКОВЛЕВ АНДРЕЙ НИКОЛАЕВИЧ



Кашни Совет çыннин таса тивĕçĕ – Совет Çарĕнче пуласси, Тăван Çĕршыва сыхласси.

Яковлев Андрей Николаевич 1940 çулта хĕрлĕ çара кайнă. Вăрçа вăл Çарта кĕтсе илнĕ. Вĕсене пурне те фронта илсе кайнă. Малти лини енелле 1941 çулхи хĕлле

колоннăпа пынă. Колонна вăрăма тăсăлса кайнă. Уçă вырăна тухсан, сасартăк нимĕç самолечĕсем вĕçсе килни курăнса кайнă. Вĕсем колонна çине бомбăсем тăкма, пулеметсенчен пеме пуçланă. Салтаксем хир тăрăх сапаланса юр çине выртнă, анчах шурă юр çинче аванах палăрнă. Яковлев А. Н. пысăк чул хыçне пытанса выртнă. Анчах чул та пулăшайман, ăна сиенленĕ çеç. Ун çывăхĕнчех бомба ўксе çурăлнă, чул катăкĕсем ăна пыра-пыра çапнă. Яковлев А. Н. тăнсăр пулса выртнă. Ăна хăйпе пĕрле çапăçнă Турхан çынни курнă та юлташĕсене чĕнсе, виççĕн çул çине илсе тухнă. Кунта машина çине выртттарса госпитале ăсатнă. Вăл госпитальте 5 уйăх выртнă. Ун хыççăн ăна киле янă. Урăхран вара вăл вăрçа кайман.

Халĕ Яковлев Андрей Николаевич – пенсионер.

*Петрова Раиса çырса илнĕ. 1978ç.*

## ЯРУШКИН ВАСИЛИЙ ТИМОФЕЕВИЧ



Эпĕ Совет çарĕнче 1939 çултан пуçласа 1946 çулччен пултăм. Вăрçă пуçлансан 4-мĕш Украина фронтĕнче тăшманпа çапăçрăм. Каярахпа Приморски армийĕнче кĕрешме тиврĕ. Эпĕ оруди командирĕччĕ.

Уйрăмах Туапсе портне хӳтĕленĕ чухне питĕ йывăр пулчĕ. Тăшман самолĕчĕсем пĕр вĕçĕмсĕр бомбасем тăкатчĕç. Пирĕн салтаксем окопсенче пытанса выртнă вăхăтра, эпир, зенитчиксем, тăшман самолечĕсем çине вутхĕм тăкаттăмăр, осколоксем, бомбасем айĕнче çапăçаттăмăр. Пирĕн расчет тӳре наводкăпа персе тăшман самолетне персе ӳкерчĕ. Çак ĕçшĕн пире «За боевые заслуги» медальсем пачĕç. Çавăн пекех Керчь хулине, Крыма ирĕке кăларнă çĕре хутшăнтăм. Тăшмана хамăр территоринчен хăваласа кăларнă хыççăн Румыние, Югославие, Венгрие ирĕке кăларассишĕн кĕрешрĕмĕр.

Наградăсем: «За оборону Кавказа», «За победу над Германией», «За боевые заслуги» тата ытти юбилей медалĕсем.

Хальхи вăхăтра Анат Тăрмăшĕнчи 8 çул вĕренмелли шкулта учительте ĕçлетĕп.

*В. Ершов çырса илнĕ.*

## ПУТЯКОВ АНТОН МАКСИМОВИЧ



Вăрçа кайиччен эпĕ Тутар республикинче Пĕсмен (Ново-Писменски) районĕнче хурт-хăмăр ăстинче ĕçлеттĕм. 1941 çулхи август уйăхĕнче мана çара илчĕç. Мари АССР-чи Суслонгер станцинче кăштах тăтăмăр та Сара-

тов облаçĕнчи Татшуцки лагерьне куçарчĕç. Хĕллеченех унта палаткăсенче пурăнтăмăр. Комисси хыççăн (манăн алă çӳлелле йăтăнмасчĕ) мана запасри полкра хăварчĕç. Ленинградран Саратов облаçне куçарнă вăрçă заводне юсаса вырнаçтарма пуçларăмăр. Хăмасенчен çапса хăма кĕрпи тултарса станоксем лартмалли çуртсем тăваттăмăр (засыпушки), тăррисене те хăмапа тольпе вителтĕмĕр.

1942 çулхи çуркунне комисси пăхсан мана киле ячĕç. Манăн мăй çинчи сурансем юхма пуçларĕç. Килтен каялла тумтирсене илме кайрăм та мана киле текех ямарĕç. Акташ районне хурт-хăмăр ăсти пулса ĕçлеме ячĕç. 1942 çулхи август уйăхĕнче фронта илсе кайрĕç. Мускав урлă Çурçĕре илсе кайрĕç. Чугун çулсем юсакан 99-мĕш батальона лекрĕм. Çулсем юсарăмăр. 1943 çулта Çурçĕре паровозсем валли вутă хатĕрлеме ячĕç. Кунта чирлерĕм те госпитале лекрĕм. Госпитальрен тухсан Обозерск станцинче тăракан санитарсен ротине санитар туса ячĕç. 1943 çулхи июнь уйăхĕнчен 1945 çулхи майăн 9-чен 3-мĕш Украина фронтĕнче Плиев генерал çарĕнче аманнисене вăрçă хирĕнчен иле-иле тухрăмăр.

1945 çулхи август уйăхĕнче киле таврăнтăм. Халĕ пенсионер.

*В. Ершов çырса илнĕ*

## ФОМИН ВЛАДИМИР ИЛЬИЧ



Эпĕ 1925-мĕш çулта Анат Тăрмăшра çуралнă. 1943 çулхи январь уйăхĕнче, 18 çулхи çамрăк, фронта тухса кайрăм. Малтанах Приморски крайĕнче службăра пултăмăр. Дальний Спаск патне çитнĕ, каярахпа Дростовра тăтăмăр. Спаск хулинчен анăçарах, 25 çухрăмра пирĕн 95-мĕш стрелковый бригадăн пулемет батальонĕ тăратчĕ. Хĕвелтухăçĕнче 9 уйăх тăтăмăр. Унтан пире Хĕвеланăçĕнчи фронта ăсатрĕç. Кунта 1943 çулхи декабрь уйăхĕнчен пуçласа 1944 çулхи апрель уйăхĕччен полк шкулĕнче вĕрентĕмĕр. Шкул Пермь хулинче вырнаçнăччĕ. 1944 çулхи май уйăхĕнче 2-мĕш Белорусси фронтне çитрĕмĕр. Малтанах оборонăра тăма тиврĕ. Унтан Минск еннелле наступлени пуçларăмăр. Брянск хулинчен çуран утма пуçласа Гомель, Бобруйск витĕр тухрăмăр, Минск хулинчен 8–10 çухрăм кăнтăраррах иртрĕмĕр. Урараң аманса госпитале лекрĕм. Госпиталь Слуцкран Варшава еннелле куçрĕ, унтан эпĕ запасри полка лекрĕм. Унпа пĕрле 1-мĕш Белорусси фронтне лекрĕм. 27-мĕш армин 235-мĕш дивизийĕнче аслă пулеметчик пултăм. Буг шывĕ Вислăна юхса кĕнĕ вырăнта оборонăра тăтăмăр. 1945 çулхи январĕн 14-мĕшĕнче наступление куçса Хĕвелтухăç Пруссие пырса кĕтĕмĕр. Февралĕн 4-мĕшĕнче хулран йывăр амантăм. Позант, Люблин хулисенче госпитальте, унтан тылри госпитальте, Улатăрти госпитальре 20 кун, унтан Мари АССР-

чи Суроха станцинче сиплентĕм. Госпитальтен каллех фронта тухса кайрăмăр. Каллех Инçет Хĕвелтухăçĕнчи Забайкальски фрончĕ. Китай çĕрĕ çинче те пултăмăр, Улан-Удэ хулине çитрĕмĕр. Улан-Удэре японецсене конвойпа хуралласа irrтертĕмĕр. 1945 çулхи июль уйăхĕнче Вологда хулине çитрĕмĕр. 1946 çулхи август уйăхĕнче киле таврăнтăм.

*Фомин И. çырса илнĕ. 1978ç.*

## КАРЛИНОВ ИВАН АВКСНТЬЕВИЧ



Карлинов Иван Авксентьевича фронта вăрçă хĕрсе çитнĕ вăхăтра, 1942 çулта, илсе каяççĕ. Тăшман ку вăхăтра пирĕн çĕршыв çине чылаях шала кĕрсе кайнă пулнă. Анчах паттăр Совет халăхĕ, тăшмана Мускав, Сталинград патĕнче çапса аркатса, наступление куçнă. Карлинов И. А. пирĕн çарсем каялла чакнине курман, тăшмана Тăван Çĕршывран хăваласа кăларнă çĕре хутшăнма тивнĕ унăн.

Çарта ăна пулеметчика вĕрентнĕ, 2-мĕш номер туса хунă. Вара пирĕн асатте тăшмана пулеметпа çунтарма пуçланă. Вăл чылай хаяр çапăçусене хутшăннă. Гродно, Белосток хулисене ирĕке кăларассишĕн кĕрешнĕ.

Юлашкинчен Белоруссири Могилев хулине тăшманран тасатнă чух Карлинов И. А. хулпуççинчен йывăр аманать. Вăл чылай вăхăт госпитальте выртать. Юлашкинчен 1944 çулхи январь уйăхĕнче ăна киле ярaççĕ.

Хальхи вăхăтра Карлинов И. А. пенсионер. Вăл 79-та пырать, 2-мĕш ушкăн инваличĕ.

Вăрçă хыççăн чылай вăхăт хушши колхозра сад ăстинче ĕçленĕ.

*Карлинов Ю. çырса илнĕ. 1978ç7*

## КАРЗАКОВ ВАСИЛИЙ КУЗЬМИЧ



1940-мĕш çулта, мана вунсаккăрти çамрăка, службăна илчĕç. Украинăри Проскурово хулинче авиачаçре служба пуçланчĕ. Эпир аэродромра ĕçлеттĕмĕр. Самолетсене анса ларма тата вĕçсе хăпарма пулăшаттăмăр, сигналсем параттăмăр.

Вăрçă пуçланнă çул эпир çакăнтах тăраттăмăр-ха. Вăрçă пуçлансан пире каялла чакма тиврĕ. Хамăрăн самолетсемпе пĕрле Харькова, унтан Сталинград патне чакса килтĕмĕр. Атăлăн сулахай енне, Верхняя Актуба ялĕ патне илсе килчĕç. Кунтан пирĕн самолетсем «кукурузниксем» вĕçевсем тăватчĕç, тăшмана аркатма пулăшатчĕç.

Сталинград патӗнче тӑшмана ҫаварса илсе парӑнтарнӑ хыҫҫӑн наступление кайрӑмӑр. Ростов-на-Дону, Крымра, Херсон хули патӗнче, Польшӑра... Ӑҫта кӑна пулмарӗҫ-ши пирӗн летчиксем! 1945 ҫулта Кенигсберг хулине ирӗке кӑларчӗҫ. Пирӗн аэродром ун ҫывӑхӗнче тӑратчӗ. Берлин ҫинелле вӗҫсе тухмаллаччӗ. Анчах ҫак вӑхӑтра тӑшмана ҫапса аркатни, ӑна парӑнтарни ҫинчен хыпар ҫитрӗ.

Вара 1945 ҫулта пире киле ячӗҫ.

Халӗ Анат Тӑрмӑшӗнчи 8 ҫул вӗренмелли шкулта ӗҫлетӗп.

*Карзаков В. К.*



## ЛЕОНТЬЕВ АЛЕКСАНДР ФИЛИППОВИЧ

Эпӗ 1925 ҫулхи февраль уйӑхӗнче ҫуралнӑ. Вӑрҫӑ пуҫланнӑ вӑхӑтра Патӑрьелӗнчи педучилищӑран вӗренсе тухнӑччӗ. 1941 ҫулхи июнӗн 25-мӗшӗнчех фронта тухса каякансен вырӑнне ӗҫлеме тиврӗ. Первомайскинчи ҫыхӑну уйрӑмӗнче «Союзпечатьре», каярахпа аслӑ бухгалтерта ӗҫлерӗм. Мӗн ҫара кайиччченех ҫӗнӗ работниксене вӗрентсе пымалла пулчӗ, ответлӑха туйса ӗҫлеме тиврӗ. Сӑр шывӗ тӑрӑх оборона линийӗ тунӑ ҫӗре те хутшӑнтӑм; халӑх ополченин боецӗ те пултӑм. 1943 ҫулхи январӗн 4-мӗшӗнче ҫара кайрӑм. Инҫет хӗвелтухӑҫӗнчи Спасск хулинче тӑтӑмӑр. 25-мӗш уйрӑм стрелковой батальонта наводчик пултӑм.

Май уйӑхӗнчен пуҫласа Сташевкӑри пограничниксен заставинче, кӗркунне Учикай поселокӗнчи оборона линийӗнче пулмалла пулчӗ, октябрь уйӑхӗнче Дроздов хулин гарнизонӗнче службӑра пултӑм. 1944 ҫулхи май уйӑхӗнче Хӗвеланӑҫне куҫарчӗҫ. Пӗрремӗш Украина фронтӗнче Каменец-Подольск облаҫӗнче ҫапӑҫӑва кӗмелле пулчӗ. Унта ҫитсен чӗркуҫҫинчен ҫӑмӑл амантрӗҫ. Сипленнӗ Хыҫҫӑн Инҫет Хӗвелтухӑҫне 2 хут командировкӑна кайса килтӗмӗр. Ноябрь уйӑхӗнче 1-мӗш Белоруссии фронтӗнчи 61-мӗш ҫарпа артиллери разведчикӗ пултӑм, ҫапӑҫусене хутшӑнтӑм. Висла юханшывӗ урлӑ Мангушевский плацдармра тӑтӑмӑр. Тӑшман плацдарм ҫине куллен артиллери тата авиаци наледчӗсем тӑватчӗ. 1944 ҫулта декабрьте сылтӑм урана тепӗр хутчен амантрӗҫ. Вара 1945 ҫулхи апрель уйӑхӗччченех Пермь облаҫӗнчи Кунгурта госпитальре сиплентӗм. Унтан тухсан, май уйӑхӗнче каллех Инҫет Хӗвелтухӑҫне куҫарчӗҫ. Инҫет Хӗвелтухӑҫ фрончӗн 390-мӗш стрелковый дивизинче артиллери разведчикӗ пулса япони милитарисчӗсене хирӗҫ ҫапӑҫрӑмӑр, Харбин, Мундек хулисене ирӗке кӑлартӑмӑр. Японии парӑннӑ хыҫҫӑн юлташсем Курил утравӗсем ҫинче пулчӗҫ. Мана икӗ хут аманнине пула, унта ямарӗҫ, 520-мӗш военоскладра ӗҫлеме хӑварчӗҫ. Окупаци ҫарӗнче пултӑм. 1946 ҫулхи апрель уйӑхӗнче хамӑр ҫӗршыва таврӑнтӑмӑр. 1946 ҫулта апрель уйӑхӗнче киле ҫитрӗм.

Вӑрҫӑ кунӗсем нихҫан та асран тухмаҫҫӗ. Куҫа уҫса пӑхма ҫук вут-ҫулӑм, тӗтӗм, шартлатса ҫурӑлакан снаряд е бомба, ура айӗнчи ҫӗр шыв хумӗ пек чӳхенсе тӑни, хӑйӑр, тусан пит-куҫа, ҫӑвара, хӑлхана хупласа хуни ӗмӗр-ӗмӗр асра юлчӗҫ. Фронтри хаяр самантсене пурнӑҫри нимӗнле йывӑрлӑхпа та танлаштарма ҫук. Вӗсене аса илсен ҫан-ҫурӑм сивчир чухнехи пек чӗтрет, фронтра пуҫ хунӑ юлташсене аса илсен чун хурланать.

Пире вӑрҫӑ кирлӗ мар. Вӑрҫӑ нихӑҫан та ан пултӑр!

*Леонтьев А. Ф.*

## ПРОХОРОВ АЛЕКСЕЙ ВАСИЛЬЕВИЧ



Алексей Васильевич Прохоров 1939 çулта Турханти вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Пĕр вăхăт Турханта (ун чухне район центрĕ унта пулнă) тĕрлĕ учрежденинче ĕçленĕ. 1939 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче ăна Хĕрлĕ Çара илнĕ. Вăл Хĕвеланăç Белоруссири Осовец хулинче полк шкулĕнче вĕреннĕ. Ун хыççăн сержант звани илсе оруди командирĕ пулнă. 1941 çулта ăна çыхăну училищине вĕренме янă.

Кунтан вĕренсе тухса лейтенант звани илнĕ. Тбилиси хулинче авиачаçре службăра пулнă. Вăрçăн малтанхи çулĕсенче авиаполкри самолетсене хăшне-пĕрне урăх çĕрелле янă, хăшĕ-пĕри тăшманпа çапăçса çунса кайнă. Вара А. В. Прохоров резерва куçараççĕ. Çамрăк офицерсем вăрçа каясшăн пулнă, рапортсем çырнă.

А. В. Прохоров кунтан Çурçĕр Кавказри фронта кайнă. Кунта чылай йывăр кĕрешӳсене хутшăнма тивнĕ. Сăрт-тусем хушшинче çапăçнă, тăшман ункине лексе ăна татса тухма та тивнĕ вĕсен.

Кун хыççăн вăл Кăнтăр фронтра тăшманпа кĕрешнĕ. «Туапсе хулишĕн кĕрешрĕмĕр, – аса илет Прохоров А. В. – пире десант пăрахрĕç. Пароходпа çыран хĕррине çитрĕмĕр. Вĕсем çыран çинчен переççĕ, эпир тинĕсрен тапăнтăмăр. Пире йывăр пулчĕ, çапах та тăшмана хуларан

хёссе кайрӑмӑр». Кун пек йывӑр ҫапӑҫусенче пӗрре мар пулма тивнӗ унӑн.

Мелитополь хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ кӗрешӳре вӗсен полкне тӑшман позицине ҫӗмӗрсе кӗрсе тылра плацдарма сарма хушнӑ. Приказа ӑнӑҫлӑ пурнӑҫланӑ, тӑшман хушшинче паника тунӑ, 12 ҫухрӑм таран тыла кӗрсе кайнӑ.

Ҫак ҫапӑҫура паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн Прохоров А. В. «Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр» орден илме тивӗҫ пулать. Ҫак ҫапӑҫурах вӑл аллинчен йывӑр аманать. Госпитальре сывалнӑ хыҫҫӑн ҫар службине юрӑхлӑ пулман пирки киле янӑ. Ку 1944 ҫулхи март уйӑхӗнче пулнӑ.

Тӑван ялта вӑл мирлӗ ӗҫе кӳлӗннӗ. Тӗрлӗ шкулсенче ачасене вӗрентнӗ. Хальхи вӑхӑтра Турханти ҫыхӑну уйрӑмӗн начальникӗ.

*Ярушкина Ираида ҫырса илнӗ. 1978ҫ.*

## ЯКОВЛЕВ ЯКОВ КОНСТАНТИНОВИЧ



Яковлев Яков Константинович 1925 ҫулхи декабӗрӗн 25-мӗшӗнче ҫуралнӑ. 17 ҫул тултарсан темиҫе кунтанах 1943 ҫулта январь уйӑхӗнче ҫара тухса каять. Вӑл Инҫет Хӗвелтухӑҫне Пирморск крайӗнчи Спасск хулине лекет. Унта вӗсене малтан пӗр уйӑх пулеметчик («Максим») пулма вӗрентеҫҫӗ. Кайран тата виҫӗ уйӑх артиллерист пулма хатӗрлеҫҫӗ. 1943 ҫул вӗҫӗнче Яковлев Я.К. 3-мӗш

Белорусси фрончĕн 2-мĕш гварди дивизийĕнче фашистсемпе çапăçать. Малтан вăл пулеметчик пулса тăшманпа кĕрешет, каярах 45 мм противотанковый орудин командирĕнче, ун хыççăн 76, 122 мм орудисен командирĕ, вăрçă вĕçленнĕ вăхăтра 100 мм орудин командирĕ пулма та тӳр килет ăна.

Вăрçăна вăл хамăр ял çыннипе Валти Ваççипе (Артемьев Василий Иванович) пĕрле кайнă. Ваçили 1945-мĕш çулхи февралĕн 20-мĕшĕнче пĕр çапăçура йывăр аманать. Унăн пырне осколок татать. Вăл вара Я.К. Яковлев аллинчех вилет. Ăна вĕсем Бартошище хули таврашне (Польша çĕрĕ) тирпейлесе пытараççĕ.

Яковлев Яков Константинович 1945-мĕш çулхи июнь уйăхĕнче Мускавра Кремльте пулса иртнĕ Çĕнтерӳ парадне хутшăнма тивĕç пулать. 2-мĕш гварди дивизийĕн составĕнче 1947 çулчченех кашни çул Мускаври Çĕнтерӳ парадне хутшăнать вăл.

1947 çулта ăна Артиллери çарĕн тĕп управленине куçараççĕ. Унта тата виçĕ çул служит тăвать вăл. 1950 çулхи майăн 10-мĕшĕнче Я. К. Яковлева киле яраççĕ. Вара вăл Мускавах юлать. Мускавра вăл Ленинла Комсомол ячĕллĕ «Москвич» машинăсем кăларакан «АЗЛК» заводра ĕçлесе пурăнать.

Вăрçăра паттăрлăх кăтартăнăшăн Яковлев Яков Константиновича «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденпа, «Отечественнăй вăрçăн орденĕсен» I–II степенĕсемпе тата вунă ытла медальпе наградăланă.

*Яковлев Я.К. 17/ II. 1986 çулта*
*В. И. Ершов патне янă çыру тăрăх*
*Н. Осипов çырнă.*



КАРЗАКОВ МИХАИЛ КУЗЬМИЧ

(Вăрçă ветеранĕ)



ПРОХОРОВ ВАСИЛИЙ ЯКОВЛЕВИЧ

(Икĕ вăрçа хутшăннă. Граждан тата Отечественнăй вăрçăсен ветеранĕ).

## ЙЫВӐР ÇУЛСЕНЕ МАНМАСӐР...

Пирӗн халӑх Тӑван Çӗршывшӑн, çынсен телейӗшӗн кӗрешсе вилнӗ паттӑрсене нихӑçан та манмасть. Анат Тӑрмӑшри шкул умӗнчи, вӑрçӑра пуç хунӑ ентешсене асӑнса лартнӑ палӑк умӗнчен çын татӑлмасть. Кунта пӗрремӗш класа килекенсене кӗтсе илеççӗ, вӗренсе тухакансене ырӑ кун-çул сунса ӑсатаççӗ, пионера илеççӗ...

Çулсерен вӑрçӑ ветеранӗсемпе тӗлпулусем ирттереççӗ, хисеплӗ хуралта тӑраççӗ, чечек кӑшӑлӗсем хураççӗ, Çӗршыва таса чун-чӗрепе сыхлама тупа тӑваççӗ. Çу каçиччен палӑк умӗнче чӗрӗ чечексем илемлӗн çунса лараççӗ.



*Ветерансем хӑйсен тантӑшӗсене асӑнса лартнӑ палӑк умне чечек кӑшӑлӗсем хураççӗ.*



*Тӑван Çӗршыва хӳтӗлесе пуçӗсене хӑнӑ ентешсене асӑнса лартнӑ ПАЛӐК. 1970 ç.*



*Вĕренекенсем хисеплĕ хуралта*
*(хурал улшăннă самантра)*



*Вĕренекенсем палăк умне чечек кăшăлĕсем хураççĕ*

Шкулта вĕренекенсене патриотла воспитани парассине пирĕн учительсем пысăк вырăна хураççĕ. Ку ĕç тĕрлĕ майпа пулса пырать: уроксене, класс тулашĕнчи мероприятисенче, историллĕ вырăнсене походсемпе экскурсисене тухса çӳренипе, хамăрăн ентешсене историне тĕпчесе вĕрентесси тата ыт. те. Кашни çулах паттăрлăх эрнисем, уçă паттăрлăх урокĕсем ирттеретпĕр.

Учительсем ачасене ТĂВАН ÇĔРШЫВА юратма, ăна кирек хăш вăхăтра та сыхлама хатĕр пулма вĕрентеççĕ.

*В. И. Ершов.*



*Вăрçă ветеранĕсем шкулта*



*Майăн 9-мĕшĕ.*
*Ветерансем çĕнтерĕве халалланă хаваслă линейкăра*





*Паттăрлăх урокĕн саманчĕсем. 7-а класс. 1977 ç.*





*Ветерансем ачасене вăрçăри ĕç-пуç çинчен каласа параççĕ*



*Ачасем ветерансен асаилӗвӗсене тимлӗн итлесе лараҫҫӗ.*



*Паттăрлăх урокӗнче. 5-а класс. 1977 ç.*
*(Тăван литература урокӗ. Учитель Ершов В. И.)*



*Вăрçăра пулнă ял-йышсем 7-а класра. 1977 ç.*



*Икĕ вăрçă ветеранĕн Прохоров В. Я. каласа памалли нумай. 1975 ç.*



*4-а класра уçă истори урокĕ ирттернĕ хыççăн. Палăк умĕнче. 1978 ç. (учитель Ершов В. И.)*



*Пионерсемпе тĕл пулнă хыççăн. 1978 ç.*



*Тĕлпулу хыççăн асăнмалăх сăн ÿкерттерме ветерансем нихăçан та хирĕç пулман*



Хамăр ялти вăрçă ветеренĕсен историне тĕпчесе вĕреннипе пĕрлех эпир историпе, граждан тата Отечественнăй вăрçăсемпе çыхăннă вырăнсене экскурсисем, велопоходсем ирттереттĕмĕр, вăл вырăнсенчи учитель-краеведсем каласа панине итлеттĕмĕр.

*В. И. Ершов.*



***Первомайскри вăтам шкулти учитель-краевед Кузьмин Н. И. тата директор заместителĕ Сидоров Н.А. вĕренекенсене музей тата палăк историйĕпе паллаштараççĕ. 1977 ç.***

## *НИКАМА ТА МАНМАН, НИМĔН ТЕ МАНĂÇМАН*

### Вĕсен ячĕсем халăх асĕнче (Вăрçăра паттăрлăх вилĕмĕпе вилнĕ ентешсем)

### ÇĂЛ АТĂКСЕМ

Антипов Алексей Игнатьевич, род. 1918. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в декабре 1944.

Антипов Николай Кузьмич, род. 1916. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 31.7.1941. Место захоронения неивестно.

Антонов Михаил Федорович, род. 1908. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 28.8.1943. Захоронен в с. Васищево Харьковского р-на Харьковской обл.

Артемьев Василий Иванович, род. 1925. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Сержант. Умер от ран 20.2. 1945. Захоронен в р-не г. Бартошице (Польша).

Артемьев Николай Николаевичич, род. 1916. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в октябре 1941.

Беляев Дмитрий Феоктистович, род. 1920. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в октябре 1941.

Вавилов Аверкий Григорьевич, род. 1906. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в декабре 1942.

Вавилов Василий Григорьевич, род. 1914. Чуваш, Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в декабре 1942.

Васильев Василий Павлович, род. 1911. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в сентябре 1941.

Егоров Алексей Игнатьевич, род. 1916. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 27.11.1941. Захоронен на ст. Аксай Аксайского р-на Ростовской обл.

Ершов Иван Петрович, род. 1916. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Сержант. Погиб в бою 31.12.1942. Захоронен в с. Даргон Северо-Осетинской Республики.

Ершов Николай Петрович, род. 1918. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в августе 1941.

Ершов Петр Петрович, род. 1922. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 23.10.1942. Захоронен в Дубовском р-не Волгоградской обл (бывш. Сталинградской).

Ершов Петр Порфирьевич, род. 1918. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Старшина. Пропал без вести в 1941 под Львовом.

Захаров Амбросий Александрович, род. 1900. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 5.12.1942. Захоронен в 1200 м. сев-зап. д. Стрикино Арсеньевского р-на Тульской обл.

Иванов Георгий Константинович, род. 1916. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Сержант. Пропал без вести в декабре 1941.

Иванов Иван Васильевич, род. 1904. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести, когда – неизвестно.

Иванов Степан Тимофеевич, род. 1915. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 17.1.1942. Захоронен в д. Дубовицы Старорусского р-на Новогородской обл.

Ильин Илья Тимофеевич, род. 1915. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в ноябре 1942.

Карзаков Афанасий Ильич, род. 1906. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в сентябре 1941.

Карзаков Иван Васильевич, род. 1907. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в декабре 1941.

Карзаков Николай Романович, род. 1922. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Сержант. Пропал без вести в мае 1941.

Карлинов Василий Николаевич, род. 1905. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в ноябре 1941.

Карлинов Иван Иванович, род. 1924. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Умер от ран 30.3.1943. Захоронен в г. Камышин Волгоградской (бывш. Сталинградской) обл.

Карлинов Митрофан Петрович, род. 1906. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Ст. сержант. Погиб в бою 21.10.1943. Захоронен в Дмитриевка Верхнеднепровского р-на Днепропетровской обл (могила № 21).

Карлинов Семен николаевич, род. 1918. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Сержант. Умер от ран 4.3.1945. Захоронен в г. Нижний Новгород.

Кириллов Егор Константинович, род. 1923. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Погиб в бою 26.9.1942. Захоронен в д. Нижняя Курпа Ставропльского края.

Карлинов Николай Константинович, род. 1920. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Сержант. Пропал без вести в августе 1941.

Кундуков Василий Павлович, род. 1917. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в ноябре 1941.

Кундуков Николай Павлович, род. 1916. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в сентября 1941.

Михеев Егор Тимофеевич, род. 1911. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в июле 1944.

Михеев Федор Тимоффевич, род. 1915. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Судьба неизвестна.

Михеев Фома Михеевич, род. 1902. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в июле 1942.

Осипов Александр Деомидович, род. 1910. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 27.9.1942. Захоронен на высоте Безымянная в Кировском р-не Ленинградской обл.

Осипов Алексей Михайлович, род. 1923. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 10.2.1943. Захоронен в д. Векшино Зубцовского р-на Тверьской (бывш. Калининской) обл.

Осипов Афанасий Федорович, род. 1916. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в сентябре 1942.

Осипов Федор Васильевич, род. 1913. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 9.7.1941. Захоронен на мысе Мишуково-Титовка Мурманской обл.

Остроумов Алексей Васильевич, род. 1914. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Мл. лейтенант. Пропал без вести в октябре 1944.

Остроумов Алексей Григорьевич, родб 1916. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Мл. лейтенант. Пропал без вести в сентяре 1941.

Остроумов Гаврил Васильевич, род. 1906. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Сержант. Пропал без вести в марте 1945.

Остроумов Егор Филиппович, род. 1916. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в апреле 1942.

Пазитов Варфоломей Александрович, род. 1919. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в августе 1944.

Пазитов Роман Александрович, род. 1906. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в декабре 1942.

Поляков Алексей Емельянович, род. 1906. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 8.3.1942. Захоронен в д. Горбы Старорусского р-на Новгородской обл.

Поляков Григорий Афанасьевич, род. 1899. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 30.9.1942. Захоронен южнее д. Озерки Оленинского р-на Тверьской (бывш. Калининской) обл.

Поляков Григорий Васильевич, род. 1916. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в мае 1943.

Поляков Григорий Тарасович, род. 1917. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Ст. сержант. Погиб в бою 6.2.1945. Захоронен в д. Домново Правдинского р-на Калининградской обл.

Поляков Максим Тарасович, род. 1906. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в марте 1943.

Поляков Михаил Андреевич, род. 1915. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 24.11.1941 в Мурманской обл. Место захоронения неизвестно.

Поляков Михаил Тарасович, род. 1919. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 4.7.1942. Захоронен в д. Бондарево Бельского р-на Тверьской (бывш. Калининской) обл.

Поляков Самуил Васильевич, род. 1904. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 15.2.1944. Захоронен в 500 м юго-вост. д. Устье-жердянка в Эстонии.

Прохоров Иван Яковлевич, род. 1904. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 28.3.1943. Захоронен в г. Старая Русса Новгородской обл.

Прохоров Петр Васильевич, род. 1924. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Гв. сержант. Погиб в бою 13.8.1944. Захоронен в с Кирув Сандомирского уезда (Польша).

Пузырев Андрей Матвеевич, род. 1918. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 7.10.1944. Место захоронения не известно.

Пятаков Алексей Григорьевич, род. 1919. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в августе 1941.

Раевский Николай Николаевич, род. 1919. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Сержант. Пропал без вести в июле 1941.

Раевский Петр Федорович, род. 1909. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в ноябре 1941.

Сапожников Егор Яковлевич, род. 1921. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в августе 1941.

Семенов Иван Данилович, род. 1901. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 27.1.1943. Захоронен в

на х. Семеновский Камышовского р-на Волгоградской (бывш. Сталинградской) обл.

Семенов Матвей Алексеевич, род. 1900. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в январе 1942.

Семенов Семен Андреевич, род. 1903. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 1.3.1942. Захоронен на окраине с. Воробьево Ржевского р-на Тверской (бывш. Калининской) обл.

Тимофеев Николай Федорович, род. 1903. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 15.10.1943. Захоронен в д. Печище Хиславичского р-на Смоленской обл.

Филиппов Ефим Ильич, род. 1893. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в 1944.

Чурбанов Василий Егорович, род. 1922. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Ст. лейтенант. Пропал без вести в апреле 1945.

Чурбанов Егор Харитонович, род. 1909. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 15.2.1944. Захоронен в д. Ломмикюли Нарвского р-на Эстония.

Чурбанов Илья Григорьевич, род. 1907. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в июле 1942.

Чурбанов Илья Семенович род. 1915. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 6.6.1942. Захоронен в г. Белый Тверской (бывш. Калининской) обл.

Чурбанов Петр Николаевич, род. 1907. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в 24 октябре 1941.

Ягудин Василий Яковлевич, род. 1916. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в июле 1941.

Ягудин Илья Данилович, род. 1912. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 4.9.1942. Захоронен в пос Красногорск Темкинского р-на Смоленской обл.

Ягудин Петр Яковлевич, род. 1910. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в августе 1942.

Яковлев Константин Федорович, род. 1903. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в августе 1942.

Яковлев Михаил Петрович, род. 1903. Чуваш. Призван Первомайским РВД. Рядовой. Пропал без вести в феврале 1944.

Ярушкин Николай Тимофеевич, род. 1923. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 4.12.1942. Захоронен в д. Нелюбовка Ржевского р-на Тверской (бывш. Калининской) обл.

Ярушкин Тимофей Яковлевич, род. 1896. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою в августе 1942 под Харьковом. Место захоронения неизвестно.

## АНАТ ТӐРМӐШСЕМ

Айгашев Илья Кузьмич, род. 1924. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в ноябре 1942.

Айгашев Кузьма Андреевич, род. 1904. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в сентябре 1943.

Александров Иван Александрович, род. 1902. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 18.5.1942. Захоронен в пос. Озеренский Ульяновского р-на Калужской обл.

Алексеев Антон Григорьевич, род. 1902. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 7.7.1944. Захоронен в г. Ошмяны Гродненской обл.

Алексеев Василий Ермолаевич, род. 1916. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Ефрейтор. Погиб в бою 2.2.1945. Захоронен в г. Едвабно (Восточна пруссия, могила №5).

Анисимов Василий Анисимович, род. 1915. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в мае 1943.

Григорьев Андрей Николаевич, род. 1901. Чуваш. Призван Соколовским РВК, Приморского края. Рядовой. Погиб в бою 25.7.1944. Захоронен в братской могиле в с. Ивакиевичи Бретского р-на Бретской обл.

Григорьев Дмитрий Егорович, род. 1914. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в ноябре 1941.

Григорьев Иван Егорович, род. 1917. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в сентябре 1941.

Григорьев Иван Филиппович, род. 1918. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в ноябре 1941.

Григорьев Лев Николаевич, род. 1907. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в июле 1942.

Давыдов Николай Арсентьевич, род. 1898. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 9.5.1942. Захоронен в д. Низино Хотынецкого р-на Орловской обл.

Едриванов Тихон Ильич, род. 1902. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в декабре 1942.

Елисеев Николай Елиссевич, род. 1917. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в 1942.

Еремеев Леонтий Ильич, род. 1901. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести 29. 11. 1942 у д. Шарнутово Сарпинского р-на Калмыцкой Республики.

Еремеев Михаил Федорович, род. 1919. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Сержант. Погиб в бою 15.2.1945. Захоронен в г. Гериц (Польша).

Иванов Николай Константинович, род. 1922. Чуваш. Призван первомайским РВК. Сержант. Погиб в бою 17.1.1945. Захоронен в с. Ожиц Варшавского всеволства.

Иванов Николай Кузьмич, род. 1916. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 13.1.1943. Захоронен в д. Дубравка Выборгского р-на Ленинградской обл.

Иванов Трофим Архипович, род. 1901. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в ноябре 1941.

Калдырмин Алексей Николаевич, род. 1918. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в сентябре 1941.

Калдырмин Трофим Михайлович, род. 1905. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Умер от ран 21.5.1943. Захоронен в д. Пильтяк Тихвинского р-на Ленинградской обл.

Капитонов Егор Семенович, род. 1920. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою в мае 1942. Захоронен в д. Большое Жабино Гатчинского р-на Ленинградской обл.

Капитонов Илья Семенович, род. 1907. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в декабре 1941.

Кузьмин Андрей Егорович, род. 1914. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 8.9.1941. Место захоронения не известно.

Леонтьев Алексей Филиппович, род. 1921. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Пропал без вести в июне 1942.

Максимов Михаил Александрович, род. 1921. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Лейтенант. Пропал без вести когда неизвестно.

Никитин Федор Павлович, род. 1921. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Сержант. Погиб в бою 23.4.1943 в ростовской обл. Место захоронения не известно.

Осипов Василий Осипович, род. 1904. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 8.6.1945. Захоронен на кладбище «Гетлессе» в г. Вена (Австрия).

Петров Егор Александрович, род. 1903. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Умер от ран 10.11.1942. Захоронен в р-не ж.-д. ст. Ломоносово Гагаринского р-на Смоленской обл.

Петров Ефим Харлампьевич, род. 1922. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в августе 1941.

Петров Илья Яковлевич, род. 1902. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в июле 1942.

Петров Николай Михайлович, род. 1918. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в августе 1944.

Петров Петр Михайлович, род. 1912. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 3.9.1942. Захоронен в д. Леоново Ульяновского р-на Калужской обл.

Прокопьев Сергей Прокопьевич, род. 1910. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в мае 1943.

Путяков Александр Максимович, род. 1898. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в июле 1942.

Путяков Василий Николаевич, род. 1924. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в марте 1943.

Путяков Григорий Николаевич, род. 1913. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в ноябре 1941.

Семенов Алексей Степанович, род. 1904. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в июле 1942.

Сергеев Василий Николаевич, род. 1913. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в октябре 1943.

Сергеев Григорий Николаевич, род. 1910. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 10.4.1942. Захоронен на окраине болота Соколий мох в Киришском р-не Ленинградской обл.

Сергеев Николай Захарович, род. 1922. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести 18. 9. 1942.

Сидоров Андрей Алекссевич, род. 1914. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в мае 1942.

Сидоров Николай Алексеевич, род. 1919. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в сентябре 1941.

Сидоров Петр Ефремович, род. 1907. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в мае 1942.

Сидоров Федр Исаакович, род. 1913. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в июле 1942.

Тихонов Борис Егорович, род. 1907. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в июле 1942.

Трифонов Данил Николаевич, род. 1905. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 9.8.1944. Захоронен в Каунасском р-не Литвы.

Тюрин Николай Иванович, род. 1919. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 17.11.1942. Захоронен в Подпорожском р-не Ленинградской обл.

Федоров Семен Вадимович, род. 1915. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в сентябре 1942.

Федоров Авраам Вадимович, род. 1918. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Умер от ран в 1945.

Федотов Макар Григорьевич, род. 1902. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 8.5.1942. Захоронен в д. Вертка Гагаринского р-на Смоленской обл.

Филиппов Ермолай Филиппович, род. 1895. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 20.1.1943. Захоронен в д. Марьино Гатчинского р-на Ленинградской обл.

Филиппов Иван Филиппович, род. 1917. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Судьба неизвестна.

Фомин Яков Фомич, род. 1900. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Умер от ран 14.3.1944. Захоронен в г. Невель Псковской обл.

Чугунов Герасим Степанович, род. 1912. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в декабре 1941.

Шагаров Василий Кириллович, род. 1910. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в декабре 1943.

Шагаров Владимир Михайлович, род. 1906. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 24.10.1941. Захоронен в д. Дубравка Ленинградской обл.

Шагаров Петр Дмитриевич, род. 1918. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Сеожант. Пропал без вести в августе 1943.

Шагаров Тихон Михайлович, род. 1918. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в сентябре 1941.

Шашков Архип Алексеевич, род. 1912. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Ефрейтор. Погиб в бою 15.2.1943. Захоронен в д. Золотково Новосокольнического р-на Псковской обл.

Ширтанов Алексей Ильич, род. 1921. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в июле 1941.

Ширтанов Алексей Фомич, род. 1898. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в феврале 1942.

Ширтанов Василий Александрович, род. 1921. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Сержант. Пропал без вести в ноябрее 1941.

Ширтанов роман Исаакович, род. 1906. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Мл. сержант. Погиб в бою 22.1.1943. Захоронен в д. Шатрицы Износковского р-на Калужской обл.

Юманов Илья Николаевич, род. 1918. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в 1941.

Юманов Николай Николаевич, род. 1922. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в 1941.

Яковлев Иван Николаевич, род. 1922. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в феврале 1942.

Яковлев Илья Николаевич, род. 1905. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Погиб в бою 24.5.1943. Захоронен в д. Долгозеро Тихвинского р-на Ленинградской обл.

Яковлев Илья Яковлевич, род. 1919. Чуваш. Призван Первомайским РВК. Рядовой. Пропал без вести в январе 1943.

## ЁМЁР-ЁМЁР АСӐНМАЛӐХ

Тирпейлӗ, тӑрӑшса хатӗрленӗ вунӑ альбом-журналран пӗрне – «Аса илӳсем» (1998) тесе ят панине савӑнса пӑхса тухрӑм. «Ку журналта ял историйӗпе ҫыхӑннӑ калаҫусене, легендӑсене тата хам астунисене ҫырнӑ. Ялти ватӑ ҫынсем каласа панисемпе, атте ҫырса хӑварнисемпе, шкул музейӗнчи материалсемпе усӑ курнӑ. Чӑваш Республикин патшалӑх архивӗнчен илнӗ материалсене, райхаҫатра пичетленнӗ статьясене те кӗртнӗ» тенӗ кӗске умсӑмахра Чӑваш Республикин тава тивӗҫлӗ учителӗ, ватӑлсан та ывӑнма пӗлмен паллӑ таврапӗлӳҫӗ Владимир Иванович Ершов. Вӑл 1932 ҫулхи кӑрлачӑн 25-мӗшӗнче Патӑрьел районӗнчи Ҫӑл Атӑк ялӗнче ҫуралнӑ, кунтах вӗреннӗ, кунтах ӗҫленӗ, халӗ те тӑван ялӗнчех пурӑнать. Нихҫан та алла усса, пӑлахая пӑрахса ларман вӑл. Вӑр-вар этем, пули-пулми ӗҫпе аппаланмасть, тытнӑ ӗҫе хӑвӑрт та тӗплӗ тума пӗлет. Ун пек ҫынсен аптраманлӑхӗ ҫирӗп, пултарнӑ ӗҫӗ-хӗлӗ курӑмлӑ.

Журналта Владимир Ивановичӑн яш чухнехи сӑнне куртӑм та тӳрех палласа илтӗм – эпӗ ӑна чӑваш педагогика институтӗнче вӗреннӗ чухнех астуса юлнӑ. Куҫӑн мар вӗренекенсем сессие кӗпӗрленсе килетчӗҫ те, вӗсем мӗнле ӑшталанса, хыпаланса, тӑрӑшса ҫӳренине курса хамӑр та, кӗҫӗнреххисем, вӗренӳ пирки мӑн ҫынла шутлама пуҫлаттӑмӑр. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫара алӑпа ҫум ҫумланӑ, мӑка ҫурлапа тырӑ вырнӑ, шип-шиплӑ уран чупса кӗтӳ кӗтнӗ. мӑран вӑкӑрпа суха тунӑ хунав ачасене чӑваш халӑхӗн паттӑр салтак-ашшӗсемпе юнашар тӑратса ӗмӗр-ӗмӗр асра юлмалӑх палӑк лартса памалла!

Владимир Ершов Ҫӗньялти ҫичӗҫуллӑх, унтан Арапуҫӗнчи вӑтам шкулсенче, ун хыҫҫӑн Канашри учительсен институтӗнче вӗреннӗ. Вара Самар облаҫӗнчи Ӑсаклӑ райцентрӗнчен 42 ҫухрӑмри Ҫӗнӗ Канкьел (Новоганькино) шкулӗнче ачасене чӑвашла вӗрентсе пурӑннӑ. Унтанах ӑна ҫара илсе кайнӑ. «Шкул Дубно крепӑҫӗнчеччӗ. Н. Гоголӗн

«Тарас Бульба» повеçне вуланă пулĕ? Унта «Бой у стен Дубно» текен сыпăк пур. Эпир çак крепăçра çар ĕçне вĕренме, салтак тивĕçне пурнăçлама тытăнтăмăр», – тенĕ асилӳсен кĕнекинче. Дубнăра чăваш каччине стена хаçачĕпе боевой листокăн художникĕ туса хунă, маттуррине кура çăмăл атлетика енĕпе гарнизон ăмăртăвĕсене янă. Каярах 12 салтаклă отделени командирне лартнă та, курсантсене вĕрентме кунтах хăварнă. Çамрăк лейтенант çарта юлас темен, 1955 çулта тăван тăрăха таврăнса Каçал енчи Вăрманхĕрри Чурачăк шкулне вырнаçнă, пединститута вĕренме кĕнĕ, 1960 çулта вырăс-чăваш уйрăмĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухнă.

Йӳç Шăхальте, Çĕньялта, Анат Тăрмăшра ĕçленĕ, шкулсенче теçетке çул ытла, 1992 çулта канăва тухиччен, тăрăшнă, директорта ĕçленĕ, шкул валли çĕнĕ çуртсем лартнă.

Ялпа тавралăх историне, генеалоги йывăçĕсене, ялйышри çынсен биографийĕсене, халăх сăмахлăхне хутла вĕреннĕ кашни пенсионерах Владимир Ивановичла çырса пыма пултармалла пек. Анчах ун пек мар çав! Хистесе каланă чухне те шкулта тăракан директорсемпе учительсемех – вĕсен тӳрĕ тивĕçĕ пулсан та – тăван тавралăха та, ачасене те юратма пултараймаççĕ. Çавăн пек лӳппер, ячĕшĕн кăна вĕрентӳçĕ ятне йăтса çӳрекен учительсем умĕнче В. И. Ершов – паттăр çын. Çавăнпа ăна Чăваш таврапĕлӳçисен пĕрлĕхĕ, ял çыннисем сĕннипе, кĕнеки тухиччēнех «хисеплĕ таврапĕлӳçĕ» ят пачĕ. Кĕнекисем тухсан «халăх ăсчахĕ» ята та тивĕçĕ тесе шутлатăп.

«Хисеплĕ таврапĕлӳçĕн» кӳрши, И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнчи чăваш ăстаçинче (факультетĕнче) тăрăшакан çамрăк ученăй Николай Осипов доцент пуçарнипе пичетленсе тухрĕ «Вĕсем Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ: аслă вăрçă ветеранĕсен асилĕвĕсем» кĕнеке. Вăл - Владимир Ершов çырнисен, вăл вĕрентнĕ ачасем пухнисен пĕр пайĕ кăна. Пуçламăшĕ тейĕпĕр. Ыттисем малашне пичетленĕç.

Кашни ялăн пулмалла çакăн пек тулли кĕнеке. Асилӳ пухма кая юлнă çĕрте тăхăмĕсем пуç тайса кăларнă ĕçсем паха пулĕччĕç.

Çăл Атăкпа Анат Тăрмăш кĕнекине эпĕ – унти çын мар пулсан та – тĕппи-йĕрĕпе вуласа, савăнса та хурланса шухăшларăм. Пĕрисен асилĕвĕсем кĕске, ытла та хурлă, тыткăнлă, вилĕмлĕ. Вăрçă хирĕнче ӳксе юлнисен ячĕпе каланă пекех туйăнать. Теприсен шăпи телейлĕрех çаврăннă, медальсемпе орденсем савăнтарнă вĕсене, кил-йышĕ кĕтсе илнĕ, пурнăçа малалла çирĕплетсе пынă.

Пин хурлăхпа пин савăнăç витĕр Аслă Çĕнтерĕве фронтра тупганă салтаксем кайса пĕтрĕç ĕнтĕ. Юман пек çирĕп сывлăхлисем çеç унта-кунта курăнаççĕ. Ĕнтĕ Чалтан (Отечество) вăрçинчи Пĕрлехи Паттăрлăхĕпе хăйсем каласа хăварнă кĕске сăмахĕсем кăна ытти ĕмĕрсем валли упранса юлĕç.

Кĕске асилӳсем. Вĕсен пахалăхне çынсем кайран тата ытларах туйса илĕç-ха. «Вăрçă çулĕ çинче хамăрăн ентеше, Совет Союзĕн Геройне В. П. Винокурова Сычевка хулинчен икĕ çухрăмра, вăрман хĕррине тирпейлесе пытарса хăвартăмăр. Вăл ун чухне полковникчĕ», – тесе аса илнĕ Николай Яковлевич Петров политрук *(«Чăваш энциклопедийĕнче» В. П. Винокурова подполковник тенĕ).* «Нева юханшывĕн юппи урлă каçнă чухне пăр çинче пĕр чăваш ачине амантрĕç. Эпĕ ăна перевязка тума пулăшрăм. Анчах çакăн хыççăнах инçе те мар снаряд ӳксе çурăлчĕ. Унăн ванчăкĕсем мана та амантрĕç. Çак осколок халĕ те пуçра ӳт ăшĕнче ларать. Виçĕ сутка юр ăшĕнче шăнса выртнă. Мана Ленинграда илсе тухса госпитале вырттарчĕç, урана операци туса татса пăрахрĕç. Киле инвалид пулса таврăнтăм *(Степан Романович Карзаков асилĕвĕ).* «1942 çулта эпĕ подрывниксен ушкăнĕнче çапăçрăм. Темиçе операцие те хутшăнма тиврĕ. Пĕррехинче çул çине тухрăмăр та маскхалатсемпе витĕнсе юр çинче выртатпăр. Лавсем килни курăнса кайрĕ. Нимĕçсем йăлтах чĕркенсе выртнă та,

куçĕсем çеç курăнаççĕ. Лавсем çине сиксе лартăмăр та 13 лава партизансен лагерне илсе кайрăмăр. Лавсем çинче апат-çимĕç пулчĕ. Нимĕççем отрядра кăна тăна кĕчĕç» *(Дмитрий Моисеевич Еремеев асилĕвĕ).*

Сталинградра Çăл Атăксем тăватă салтак пуç хунă: Петр Ершов, Николай Карзаков, Иван Карлинов, Иван Семенов. Çăл Атăксем, ытти чăваш каччисемпе хĕрĕсем пекех, пĕтĕм Европа анлăшĕнче эпир вĕсене çакăн пек ятран асăнасса кĕтсе вырта ççĕ.

Çăл Атăк хресченĕсен ачисем – Тăван çĕршывăн шанчăклă салтакĕсем пулнă та, пулĕç те. В. И. Ершов учитель-таврапĕлÿçĕ палăртнă тăрăх, унăн вăрçăри ентешĕсенчен сержантсем 12, тинĕс паттăрĕсем – моряксем – 20 каччă! Офицерсем (лейтенантран полковник таран) 10 çын. Дубно патĕнчи казаксен ятарласа салтакла ялĕсенче те çакăнтан мала мар пулĕ тесе шутлатăп.

Çăл Атăкпа Анат Тăрмăшра паллă çынсем йышлă çуралса ÿснĕ. Кунта «Ача амăшĕ героиня» ята тивĕçнисем 6 хĕрарăм, вĕсен чапа тухнă ывăлĕ-хĕрне ятарласа шутласа пăхма тивет. Эпĕ çывăх пĕлнисем кăна темиçен – физмат ăслăлăхĕсен докторĕ Петр Остроумов, Николай Ершов врач, РФ тава тивĕçлĕ инженерĕ Николай Остроумов, Çĕнĕ Шупашкарти богослови кандидачĕ Илия Карлинов протоиерей, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Николай Осипов. Аслă пĕлÿ илнисем тахçанах çĕр çынран иртсе кайнă!

Парахатрлă та сăваплă ĕç – ĕмĕр асăнмалăх кĕнеке кăларни. Çăл Атăксем пуçланă ĕçĕн тăсăмĕ пуласси пирки пĕрре те иккĕленместĕп. Чăмăртанупа ăнăçу сунатăп кăна.

*Виталий СТАНЬЯЛ, Чăваш таврапĕлÿçисен пĕрлĕхĕн тата Чăваш халăх академийĕн хисеплĕ президенчĕ.*
*2010, пуш, 25, Шупашкар.*

ТУПМАЛЛИ

УМСĂМАХ....................3
Кĕнекене вулакансене....................6
Çĕнтерӳшĕн тăрăшнă....................8
ВĔСЕМ ВĂРÇĂРА КĔРЕШНĔ, ÇĔНТЕРӲÇĔ ПУЛСА ТАВРĂННĂ....................16
Çăл Атăксем....................16
Анат Тăрмăшсем....................17
САЛТАК ÇЫРНĂ ВИÇ КĔТЕСЛĔ ÇЫРУСЕМ....................19
ÇĔНТЕРĔВЕ ТУПТАКАНСЕМ....................30
Ильин Федор Тимофеевич....................30
Васильев Порфирий Павлович....................31
Карзаков Павел Кузьмич....................32
Остроумов Николай Васильевич....................33
Карзаков Степан Романович....................34
Пузырев Константин Матвеевич....................36
Карзаков Роман Васильевич....................37
Андреев Николай Николаевич....................38
Ершов Иван Порфирьевич....................39
Ершов Михаил Федорович....................40
Семенов Петр Данилович....................42
Вавилов Герасим Григорьевич....................43
Чурбанов Кирилл Григорьевич....................44
Еремеев Дмитрий Моисеевич....................45
Капитонов Никон Семенович....................49
Анисимов Петр Анисимович....................50
Егоров Тихон Михайлович....................51
Шашков Василий Николаевич....................53
Васильев Василий Софронович....................54
Путяков Сергей Авксентьевич....................55
Николаев Иван Яковлевич....................57
Петров Николай Яковлевич....................58
Гаврилов Петр Емельянович....................59
Яковлев Андрей Николаевич....................60
Ярушкин Василий Тимофеевич....................61
Путяков Антон Максимович....................62
Фомин Владимир Ильич....................64
Карлинов Иван Авксентьевич....................65
Карзаков Василий Кузьмич....................66

Леонтьев Александр Филипович....................................67
Прохоров Алексей Васильеич...........................................69
Яковлев Яков Константинович......................................70
ЙЫВĂР ÇУЛСЕНЕ МАНМАСĂР..........................................73
НИКАМА ТА МАНМАН, НИМĔН ТЕ МАНĂÇМАН..........83
Вĕсен ячĕсем халăх асĕнче.....................................................83
Çăл Атăксем.....................................................................83
Анат Тăрмсăшсем..........................................................90
ЁМĔР–ЁМĔР АСĂНМАЛĂХ............................................97
ТУПМАЛЛИ.................................................................101

Чувашская народная академия

# ОНИ ЗАЩИЩАЛИ РОДИНУ

(Воспоминания ветеранов Великой Отечественной войны, уроженцев деревень Верхнее Атыково и Нижнее Турмышево Батыревского района ЧР)

Составители :
Ершов Владимир Иванович
Осипов Николай Николаевич

Редактор Н. Д. Еремеев
Художник-дизайнер К. Ф. Осипова
Технический редактор А. И. Кошкина
Корректор И. В. Ершов

Подписано в печать 25.03.2010. Формат 64x84/16.
Бумага писчая. Печать оперативная. Усл. печ. л. 4.2
Тираж 50 экз. Заказ №

Составление:
ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Отпечатано в типографии «Новое Время»
428000, Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1

Чувашская народная ...

# ОНИ ЗАЩИЩАЛИ РОДИНУ

(Воспоминания ветеранов Великой Отечественной войны, уроженцев деревень Верхние Атиково и Нижнее Турмышево Батыревского района ЧР)

Составители:
Ершов Владимир Иванович
Семенов Николай Николаевич

Редактор Н. Д. Еремеева
Художник-дизайнер К. Ф. Осипова
Технический редактор А. И. Кузнецова
Корректор Н. В. Ершов

Подписано в печать 25.11.2010. Формат 60х84/16
Бумага писчая. Печать оперативная. Усл. печ. л. 4,3
Тираж 50 экз. Заказ №

Оригинал-макет
ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Отпечатано в типографии «Новое Время»
428000, Чебоксары, ул. [illegible]

30.00

# КĔНЕКЕНЕ ХАТĔРЛЕКЕНСЕМ



**Ершов Владимир Иванович.**
1932 çулта кăрлачăн 25-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Çăл Атăк ялĕнче çуралнă. Канашри учительсем хатĕрлекен институтран, Шупашкарти И.Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ, РСФСР Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ. Анат Тăрмăш шкулĕнчи краеведени музейне йĕркелесе уçаканĕ. Владимир Иванович 2010 çулта «Хисеплĕ таврапĕлӳçĕ» ята тивĕçнĕ.



**Осипов Николай Николаевич.**
1978 çулта раштавăн 25-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Çăл Атăк ялĕнче çуралнă. И.Н. Ульянов ячĕллĕ патшалăх, И.Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика университечĕсене пĕтернĕ. Филологи наукисен кандидачĕ. Чăваш патшалăх педагогика университечĕн чăваш литература кафедрин доценчĕ.

Хальхи вăхăтра педуниверситетра чăваш литературин историйĕ, литература краеведенийĕ, халăх сăмахлăхĕ дисциплинăсене ертсе пырать.